*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

72 (2484) [1]
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

ЮН КУН

2014,
авăн, 17

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ВĂХĂТ ТАППИ

# Паянхи кунпа кăна пурăнас марччĕ



### "Черетре 20 çул тăтăмăр..."

Чăваш Ен Пуçлăхĕн аллинчен хваттер уççи илни – пысăк чыс. Черетре 15-20 çул тăнă çыншăн ĕмĕр асра юлмалли самант. Канашри чукун çул узелĕнче тепловоз машинисчĕ пулса ĕçлекен Николай Яковлев савăнăçне пытармарĕ:

– Канаша ĕçлĕ çул-çӳреве килнĕ Михаил Игнатьев алă тытса саламларĕ. Пирĕн хулара хăйĕн пурнăçне чукун çулпа çыхăнтарнă 3 пин ытла çын пурăнать. Çуркунне 12 хваттерлĕ çурт тума пуçласан иккĕленӳ пурччĕ. Турра шĕкĕр, 20 çул кĕтни сая каймарĕ. Халь манран телейлĕ çын тĕнчере те çук.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Чул хула чукун çулĕн ертӳçи Анатолий Лесун пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлесси çинчен калакан Килĕшӳве алă пусрĕç.

Анатолий Лесун каланă тăрăх – чукун çул 15 регионпа тусла çыхăну йĕркеленĕ. Чăвашсемпе ĕçлеме уйрăмах кăмăллине палăртрĕ вăл. Иртнĕ çул чукун çул пирĕн республика экономикине 750 млн тенкĕлĕх инвестици хывнă. Çĕнĕ локомотив деповĕ тума 400 млн уйăраççĕ.

Икĕ енĕшĕн те усăллă çыхăнусене Михаил Игнатьев çапла хакларĕ:

– Анатолий Федоровичпа эпĕ унччен те ĕçлĕ тĕл пулусем иттернĕ. Ĕçе йĕркелеме пĕлекен маттур ертӳçĕ. Пирĕн предприятисем вĕсен заказĕпе 1.150 млн тенкĕлĕх продукции туса кăларчĕç. Хăвăрт çӳрекен пуйăссен Мускав – Хусан çулне тума тытăнсан заказсен портфелĕ 3 млрд тенкĕрен иртмелле. Малашлăхлă проектсене пурнăçа кĕртме Анăç санкцийĕсем чăрмантармĕç тесе шутлатăп. Хăраса тăмалла мар, утăм хыççăн утăм туса малаллах ăнтăлмалла. Экономикăри лару-тăру çăмăлах мар пулин те пĕр социаллă программăна та пăрахăçламан эпир. Акă кивĕ суртйĕртен 65 хваттерлĕ хătлă çурта куçакан çемьесене ырлăх-сывлăх сунасшăн. Вĕсен йышĕнче 3 тата 5 ачаллисене те курăпăр малашне.

### "Пире никам та килсе туса памĕ"

Йĕпреçри тĕл пулусенче Михаил Игнатьев çак шухăша палăртса каларĕ: "Ял хуçалăхне вăйлă аталантармалли меллĕ самант. Пире никам та килсе туса памĕ. Йăлтах хамăрăн çаврăнăçулăхпа хастарлăхран килет. Юлса пыракансене, сăмахран Калинин ячĕллĕ хуçалăх анса ларнă, çĕклеме пултаракан çамрăксене пулăшмалла".

Район пурнăçĕпе паллашасси поселок пасарĕнчен пуçланчĕ. Республика пуçлăхĕ килессе пĕлнĕ халăх йышлă пухăннă. Кашниййĕнех чун ыратăвне пĕлтерес килет-тĕр. Тата хăçан курса калаçăн-ха. Паллах, кăмăла ирĕке янă çынсем кулленхи ыйтусене çĕклеççĕ:

– Пирĕн ял тăрăхĕн пуçлăхĕшĕн ик айкки те тăвайкки. Нимĕн те тумасть, шалу çеç илсе пурăнать...

**Игнатьев: Ĕç-пуç чăннипех япăхса кайнă пулсан влаç ят-сумне ярать вăл. Халăх суйланă, ман ăна ĕçрен кăларма право çук. Черетлĕ суйлавра камшăн сасăламаллине пĕлетĕр. Сăмах май, ĕçе юхăнтарнă 80 кăлава вырăна пушатрĕ çак çулсенче. Пултарайманнисенчен хăтăлмалла.**

– Кранран таса мар шыв юхнине, вăл çӳлти хутри хваттерсене хăпарайманнине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Çăвĕпех çапла нушалантăмăр. Влаç пур-и пирĕн?

**Игнатьев: Ку шыв пусăмĕ пĕчĕккипе çыхăннă. "Водоканал" çыннисемпе уйрăммăн калаçăпăр. Капла ĕçлеме юрамасть. Тивĕçĕсене кирлĕ пек пурнăçламаççĕ пулсан урăх ĕç шыраччăр.**

– Канаш районĕнчен çӳп-çапа мĕншĕн пирĕн тăрăха килсе тăкнине ăнланмастпăр. Тепĕр самант – ĕлĕкрех кил умне, урама вараланăшăн штрафлатчĕç. Халь кам мĕн пăрахас тет – çавна перет.

**Игнатьев: Тĕрĕс асăрхаттару.Тасалăх культури çитсех каймасть. Урамсене тирпейлессине вырăнти кăлавасем йĕркелеме тивĕç. Канмалли кунсенче яла кайсан эпир çемьепе кил таврашне яланах пуçтаратпăр, çӳп-çап урама вăркăнмасть. Урам тасалăхĕ кашни çын тирпейлĕхĕнчен килет.**

**Канашран çӳп-çап турттарни çинчен калăр. Унта каяшсене тирпейлекен ятарлă полигон тумасăр ку ыйту татăлмĕ. Канаш РФ монохуласен программине кĕнине пĕлетĕр, çӳп-çап вырăнĕ валли укçа тупатпăрах.**

– Кунта ĕç çуккипе Мускава çӳретпĕр. "Çамрăк çемье" программăна кĕме май çук-ши?

**Игнатьев: Каçарăр та, республикипе рабочи професийĕсен 18 пин вакансийĕ. Паллах, Мускава е Питĕре каясси – сирĕн ирĕк. Аван тӳлеççĕ пуль-ха. Эсир мĕнле ĕçлесе пурăннине лайăх пĕлетĕп. Унти хваттерсем пире валли мар, пуяннисемшĕн – тархасшăн. Вырăнта ĕç тупассишĕн тăрăшмалла. Сирĕн мăшăр бюджет организацийĕнче шутланать пулсан ипотека майĕсемпе усă курма май пур. Ăнланатăп, тӳлесе татма йывăр, çапах хăвăрăн кĕтес пулать.**

– Çулла "Асамат" садике юсава хупса хучĕç, ыттисем те ĕçлемерĕç. Унтанпа тăватă уйăх иртрĕ. Ачана ăçта хăвармалла ман?

**Игнатьев: Ача садĕнчи вак-тĕвек ĕççене вĕçлеме тата миçе уйăх кирлĕ? Пĕр уйăхран ытла хупă тăмалла мар вăл. Строительсене пуçран шăлса пурăнсан вĕсем ĕнсе çине хăпарса ларĕç.**

Поселокри 1-мĕш шкула кĕрсен кунта бухгалтер ларни Михаил Игнатьева тĕлĕнтерчĕ. Пур районти вĕрентӳ пайĕсем централизациленĕ бухгалтери тытăмне йĕркеленĕ, Йĕпреçсем 18 бухгалтерпа экономиста штатра тытаççĕ!

Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕ çинчен район ертӳçи Николай Чугаров тунă доклада пур енлĕн сӳтсе яврĕç. Пĕтĕмĕшле илсен ырă туртăмсем пур. ЧР экономика министрĕ Владимир Аврелькин каланă тăрăх – 8 уйăхра бюджет тупăшне 7,2 процент ӳстернĕ, республикăн вăтам кăтартăвĕнчен пысăкрах ку. Çĕр лаптăкĕсене патшалăх регистрацийĕ тăвассипе ăнăçлă ĕçлеççĕ.Тĕрлĕ харпăрлăхлă хуçалăхсенче продукции туса илесси 101, 8 процентпа танлашнă.

Канашлури калаçăва Михаил Игнатьев пĕтĕмлетрĕ:

– Ял хуçалăх продукцийĕ лайăх сутăнна саманара питĕ мăран ĕçленин тĕп сăлтавĕ – тупăш кӳме пултаракан проектсем çукки. Çĕнĕ шухăшлав, хавхалану сисĕнсех каймасть. Малашлăха пăхмалла, паянхи кунпа кăна пурăнас марччĕ.

Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.

ЭРНЕ

## Виçĕ ял тăрăхĕн пуçлăхне суйланă

Авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнчи çĕршыври суйлавра "Пĕрлĕхлĕ Раççей" политика партийĕн кандидачĕсем пур округра та пысăк кăтартупа вырăнти влаç тытăмне суйланнă. Республикăра виçĕ ял тăрăхĕн пуçлăхне палăртнă.

Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн администрацине малашне Галина Ефимова ертсе пырĕ. Галина Георгиевнăшăн суйлавçăсен 76,49% сасăланă.

Шупашкар районĕнчи Çырмапуç тата Тăвай районĕнчи Чутей ял тăрăхĕсен пуçлăхĕн "тилхепине алла илнĕ" Рамиль Гельметдиновпа Григорий Куклов та – асăннă парти сĕннĕ кандидатсем. Рамиль Гаязетдиновичшăн электоратăн 81,76% сасăланă, Григорий Петровичшăн – 76,19%.

РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Сергей Валенков Чăваш Республикинче суйлав чăрмавсăр, тавлашусăр иртнине, унăн пĕтĕмлетĕвĕ объективлă пулнине çирĕплетнĕ.

## Ĕç укçи ӳсет

Республикăри строительство комплексĕ йĕркеллĕ аталаннине çак цифрăсем аван кăтартса параççĕ: кăçалхи сакăр уйăхра 22.574,7 млн тенкĕлĕх (иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, унчченхи хаксене шута илсен – 101,3 процент) строительствăпа монтаж ĕçĕсем пурнăçланă. Стройиндустри предприятийĕсем 5.574,6 млн тенкĕлĕх (111,7 процент) минерал продукцийĕ кăларнă, пулăшу ĕçĕсем туса панă.

Отрасльте ĕç укçи те ӳсет. 2013 çулхинчен 108,6 процент (22.633,7 тенке çити) хăпарнă. Республикăри вăтам шайран 11,5 процент ытларах.

ЫРАН

Авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче РФ Президенчĕн Чăваш Енри приемнăйĕнче (Шупашкар, Ленинград урамĕ, 36-мĕш çурт) Росреестрăн республикăри Управленийĕн пуçлăхĕ Екатерина Карпеева çынсене йышăнать.

Екатерина Владимировна куçман пурлăхпа çыхăннă ыйтусемпе сĕнӳ-канаш парĕ, вĕсен тытăмĕ çĕр йĕркелӳ, çĕр мониторингĕпе тĕрĕслев, геодези, картографи тата арбитраж управляющийĕсем тĕлĕшпе мĕнлерех ĕçлесе пыни çинчен каласа кăтартĕ.

Йышăнăва харпăрлăх документчĕсемпе пыма сĕнетпĕр. Маларах çырăнмалли тел: 62-22-33.

Йышăну 15.00 – 17.00 сехетсенче.

# Ĕнерен – сакăр пин литр


Валентина Спиридонова


Лидия Андреева

Валентинăпа Николай Спиридоновсем хулара чылай çул пурăнса ывăлпа хĕр пăхса ӳстернĕ. Халь чун тĕпренчĕкĕсем хăйсем çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçленĕ Валя çапла каласа парать:

– Ĕлĕкрех вăйлă предприяти шутланнă комбинат панкрута тухни миçе пин çемьене нуша кăтартрĕ пулĕ. Малтан йыша чакарчĕç, каярахпа пурне те канăва ярасси çинчен пĕлтерчĕç. Ку уçăмсăрлăх йăлăхтарсах çитерчĕ. Хулара ĕççĕр ларман эпĕ, ан ӳркен çеç. Çапах упăшкапа ларса шухăшларăмăр та яла пурăнма куçас терĕмĕр. Упăшка ашшĕ-амăшĕн килĕ пушă ларать. Ачасем яла каяс çук. Кил-çурчĕ йĕркеллех, хуралтисем тĕрĕс-тĕкел. Хуçалăха тытса пыма пирĕн вăй-хал пур-ха.

Çапла вара Спиридоновсем Етĕрне районĕнчи Лапракассинче тымар янă. Тĕрĕссипе, Николай çакăнта çуралса ӳснĕ. Валентина, шăпа çавнашкал тесе ӳпкелешме хăнăхманскер, ялти сĕт-çу фермине вырнаçнă. Çамрăксем каясшăн мар унта. Ĕç укçине вăхăтра пани те илĕртмест, тупата.

Паллах, тутлă ыйхăна татса ирхине тăваттăра ура çине сиксе тăратăн та пиллĕкри сăвăма чупатăн. Унчченхи пек алăпа сумаççĕ. Витере кун ирттерместĕн – ĕçе икĕ сменăпа йĕркеленĕ. Апла пулин те сана хăнăхнă ĕне сана çеç сĕт лайăх антарать!

Паян Валентина Спиридонова кашнинчен вăтамран 8.000 литр ытла сĕт суса районта çеç мар, республикипе палăрнă.

– Мана мухтаса çырсан ыттисем кӳренĕç,– тет маттур хĕрарăм.– Пурте тăрăшуллă: Лидия Андреева, Зоя Филиппова, Света Хренова, Валентина Белова, Мария Фадеева, Елизавета Смирнова, Люда Отякова.

Тăххăр çитеспе ирхи сăвăмран таврăннă та килти ĕç-пуç пирки сăмахлать вăл. Пай çĕрĕ çинчи кăшмана кăларса пĕтермелле, килти сыснасемпе чăх-чĕп пирки манмалла мар. Пĕр ĕнепе виçĕ пăрăва хĕл каçарма апат нумай кирлĕ.

Кил хуçалăхĕ упăшки çинче. Николай платникре тăрмашнă, йывăç касса чутлассипе алли пырать, техникăна аван чухлать. Йывăç пӳртне тулаш енчен хитре планкăсем çапса çĕнĕ сăн кĕртнĕ. Унăн ашшĕ сывă чухне хăваран лăпă, карçынкка çыхма питĕ ăста пулни çинчен каласа пачĕç. Ывăлĕ мĕн пĕчĕкрен алла илнĕ çак вăрттăнлăха, анчах халь аппаланма вăхăт çукрах терĕ.

Валентинăпа фермăра çума çуммăн ĕçлекенни – Лидия Андреева доярка. Çав тери кăмăллă та тараватхĕрарăм. Кăçал вăл ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн ятне илнĕ. Çемйипе кӳршĕ ялта – Тукасра пурăнаççĕ. Çуртйĕрĕ йăлтах кирпĕчрен, хуралтисем çирĕп, икĕ хутлă. Выльăх нумай усраççĕ. Кунта ĕçчен те татуллă çемье пурăнни тӳрех сисĕнет. Ачисем çутталла туртăннинчен мĕн тĕлĕнмелли. Аслă хĕрĕ медицина колледжне вĕренме кĕнĕ, ывăлĕ Валера Етĕрнери ял хуçалăх техникумĕнче пĕлӳ илет. Тен, пурăна киле тăван кĕтесе специалист пулса таврăнĕ.

– Пирĕн коллектив сăвăма 7.463 литра çитерсе районти ăмăртура мала тухрĕ, – каласа парать ферма заведующийĕ Владислав Николаев. – Спиридоновăпа Андрееван кăтартăвĕ пысăкрах – 8.125 кг. Пурĕ сăвакан 183 ĕне пирĕн. Лайăх ăратлисене çеç тытатпăр. Ӳсĕм апат рационне çирĕп пăхăннинчен килет. Тутлăхлă апатпа продукци те нумайрах илетĕн. Чĕр-тавара сĕт заводне ăсатиччен ун пахалăхне кунтах тĕрĕслесе палăртатпăр. Кĕтĕве çуллен çĕнетсе пынă. Ман мăшăр зоотехник пулнă май сĕнӳ-канашпа яланах пулăшма хатĕр. Дояркăсенчен ытларахăшĕ пуян опыт пухнăскерсем. Сăмахран, Хренова 20 çул ытла, Фадеева 30 çул выльăх патĕнче. Нумай ачаллă Мария Фадеева ялти ваттисен пултарулăх ушкăнĕпе концертсене хутшăнма та вăхăт тупать.

Владислав Витальевич фермăна куçни пилĕк çул. Маларах Çимеккасси ял бригадине, унтан производство участокне ( "Ленинская искра" хуçалăхра 5 производство участокĕ) ертсе пынă. Халăхпа ĕçлес пултарулăхĕ ашшĕнчен куçнă пулас, вăл хăй вăхăтĕнче ферма заведующийĕнче 40 çул ытла тăрăшнă.

Туслă йышра арçынсем те пур. Калăпăр, техника операторĕ Владимир Анисимов, выльăх тухтăрĕ Александр Тобоев. Саша ветеринари аспирантурине кĕнĕ, кунта ăсталăха туптать.

"Ленинская искра" хуçалăх ертӳçи Валерий Герасимов каланă тăрăх – выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ хатĕрлесен сăвакан 300 пуç ĕне чиперех хĕл каçĕ. Кăçал пӳлмене пилĕк пин тонна тырă кĕнĕ. Килте ĕне тытакансене ( 900 пуç) хавхалантармалли майсемпе анлă усă кураççĕ. Сĕтĕн кашни литрĕшĕн тырă, ута-улăм парать хуçалăх.

– Колхоза Аркадий Айдак ертсе пынă çулсенче тунă çитĕнӳсем пире вăй-хал хушаççĕ, – палăртрĕ Валерий Геннадьевич.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

ШУХĂШ

# Ялта — хура, хулара — таса-ши?

Пĕр вăхăт вăл тăван ял хуçалăх предприятийĕнче бригадирта ĕçлерĕ. Тăрăшатчĕ, çамрăккине кура-ши шухăччĕ. Ун хыççăн хулана тухса кайрĕ. Бизнес илĕртрĕ пулас та пуçĕпех суту-илӳ ĕçне путрĕ. Çĕрне-кунне пĕлмесĕр автомашинипе тавар турттарчĕ, пĕр пасартан юлмарĕ. Укçи-тенкипе хăйĕн ĕçне йĕркелерĕ, йывăç касса хăма çурма тытăнчĕ. Строительство материалне туянакансем йышлăран ĕç аван кайрĕ. Лавккасем тытма пуçларĕ.

Тăван ялĕнчи хуçалăх ку вăхăтра самай юхăннăччĕ. Çакна кура ертӳçĕне улăштарса ун вырăнне пултаруллă бизнесмена лартма шухăшларĕç районти пуçлăхсем. Пĕрремĕш пухурах май килмерĕ çапла тума. Иккĕмĕш хутĕнче хуçалăх тилхепине укçаллă çын алла илчĕ. Хăйĕн ятне ямарĕ вăл. Ял хуçалăх предприятийĕ никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ фермер хуçалăхĕ аталансах пычĕ. Хушма бизнес ăна нумай йывăрлăха парăнтарма пулăшрĕ. Çулталăк каялла конкурсра çĕнтерсе патшалăх грантне тивĕçрĕ, юхăннă витене тĕпрен юсарĕ, чаплă оборудовани вырнаçтарчĕ, канмалли, çăвăнмалли пӳлĕмсем йĕркелерĕ, çĕнĕ пăру вити турĕ тата ытти те. Фермăра юрласа ĕçле темелле. Шалу укçи те ял çыннине çырлахтармалла. Анчах икĕ пин çын пурăнакан тăрăхра ферма ĕçне юрăхлине тупаймарĕ.

Килекенсем пулчĕç. Пĕрисем пĕрремĕш ĕç укçи иличчен кăна тытăнса тăма пултарчĕç, теприсем те вăрах чăтаймарĕç – ĕçке ярăнчĕç. Сĕт паракан ăратлă ĕне (пĕрин хакĕ – çĕр пин тенке яхăн) вĕсен мухмăр-сухмăрĕ сирĕлсе пĕтессе кĕтеймест-çке. Килен-каян дояркăсене пула ĕнесем те, хуçалăх ертӳçи те нумай нушаланчĕç. Фермăна ертсе пыракан хĕрарăмăн сĕт сума пĕрре мар ĕне умне тăма тиврĕ.

Телее тени вырăнлă-ши кун пек чухне, анчах нуша курнă вăхăтра районти пĕр хуçалăх панкрута тухнă май ĕне выльăха пĕтерчĕ. Тăрăшуллă дояркăсем ĕççĕр юлчĕç. Фермер вĕсене ӳкĕтлеме шутларĕ. Килĕшсе татăлчĕç: халĕ фермер дояркăсене ĕçе хăй çӳрекен чаплă машинипе турттарать.

Ял хуçалăхне аталантармалли çинчен нумай калаçатпăр. Калаçатпăр çеç мар, çĕнĕ комплекссем те тăватпăр. Вĕсенче ĕçлеме вара çын тупаймастпăр. Çав вăхăтрах ялта ĕç тупма йывăр тетпĕр. Халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсенче черетре тăракан йышлă, анчах фермăна каяс кăмăлли çук. Пĕр çӳпçе ылтăн сĕнсен те унта уттараймăн пулĕ. Ĕç профессийĕ хисепрен тухнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăлта инвестор пулăшнипе "Нам ЭКО" хуçалăх аталанать. Выльăх-чĕрлĕх фермине механизациленĕ, перекетлĕ техника ĕçлет. Тăрăшса вăй хума условисем пур, шалу укçи те пĕчĕк мар. Икĕ пине яхăн çын пурăнакан ял тăрăхĕнче чаплă фермăна çул тытакан çукпа пĕрех. Ют çĕр-шывран килнисем (миграци саккунне пăхăнса ĕçе вырнаçтарнă) выльăх пăхаççĕ. Таджиксем ферма территорийĕнчех пурăнаççĕ. Хуçалăх вĕсем валли юхăннă хуралта юсанă, хăтлăх кĕртнĕ. Çичĕ ютран килнисемсĕр пуçне фермăра Шупашкар район çыннисем вăй хураççĕ тата вырăнти ытти ял тăрăхĕнчен çӳреççĕ.

Паян çапла, ыран мĕнле пулĕ? Ачасене тăван тăрăхран пистерсен, ферма ĕçĕ хура ĕç тесе вĕрентсен ял хуçалăхĕ мĕнле аталанĕ-ши? Çамрăксен туртмалла-çке ăна малалла. Чылай хуçалăхра вĕсен йышне пĕр алă пӳрнисемпе шутлама пулать.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн стипендине пултаруллă яш-кĕрĕм çулсерен тивĕçет. Вĕсем хушшинче ял хуçалăхĕнче тăрăшакансем пур паллах, анчах каллех сахал. Вăтăр çула çитмен тата тăрăшса ĕçлекен çамрăксене шыраса халтан каяççĕ хăшпĕр районсенче. Çĕнĕ çынсем пулманран пĕрисенех темиçе хут кандидата тăратма тивет.

Тепĕр чухне çамрăксене ял кирлĕ. Хăвăртрах хваттер туянма. Ялта регистрациленеççĕ, пурăнмалли условисене лайăхлатма черете тăраççĕ. Патшалăх программипе черет çитсен хваттер туянаççĕ те хулара тĕпленеççĕ. Хулара, тен, пысăк укçаллă çĕре те вырнаçаймасть çамрăк, ялти чаплă фермăра ĕçлекенрен те сахалрах тӳлеççĕ, анчах вăл хулара хура мар, таса çын иккен. Унти сывлăш, куçа илĕртекен апат-çимĕç сывлăхне хавшатнине, ĕмĕрне кĕскетнине ăнланмасть...

**Ирина Павлова.**

Инҫетри ял сасси

# Ирҫе те латыш, вырӑс та тутар...

Ирҫе, хохол, вырӑс, тутар, латыш – кама кӑна йышӑнман пулӗ Комсомольски районӗнчи Вутлан ялӗ. Вӑл вӑхӑтри колхоза ахальтен мар "Интернационал" ят панӑ. Вутлана вӗсене тӗрлӗ шӑпа илсе ҫитернӗ. Ҫитмӗл тӑххӑрти Елена Павловна Краснова аса илнӗ тӑрӑх – пӗр пуян хӗрӗ ҫак яла инҫетрен тарса килнӗ. Хӑйӗн ҫӗр-шывӗнче юратнӑ каччине вӗлернӗрен. Савнине ют хӗрпе пӗрле тытнӑ-ши е урӑх сӑлтавпа? Чӑнлӑхӑн вӗҫне-хӗрне тухса пӗтеес ҫук. Чӑваш Ене тарса килнӗ чухне ҫул ҫинче хӗрӗн амӑшӗ вилнӗ-мӗн. Таркӑна шыракансем Вутлана ҫитнӗ пулать, анчах хӗр чӑвашрах юлнӑ. Хӑйӗн шӑпи ҫинчен вӑл урӑхларах каласа кӑтартнӑран-ши, иккӗленекенсем ялта паян та тупӑнаҫҫӗ. Анчах ют халӑх хӗрарӑмӗ темиҫе ҫул каяллах пурнӑҫпа сыв пуллашнӑ. Чӑвашра усал ӗҫ туман, кунта ҫемьеленсе чипер, йӗркеллӗ пурӑннӑ, ачапӑчаллӑ пулнӑ.

Ача тенӗрен Вутлан мӗн чухлӗ тӑлӑха хӑй хӳттине илмен-ши? Ача ҫурчӗ вырнаҫнӑ кунта. Шкула ҫӳрекен тӑлӑхсем пурӑннӑ унта. Йӗпреҫ районне куҫарса кайиччен ҫурт паянхи клуб вырӑнӗнче ларнӑ.

"Клубӗ паян пур-ха, ыран темле...", – систерчӗҫ ҫул ҫинче калаҫва хутшӑннӑ ял ҫыннисем. Эпир те ҫитсе куртӑмӑр иртнӗ саманаран юлнӑ социаллӑ объекта. Малараххи кунсенче ҫумӑр ҫунӑран ҫурт урайӗнчи кӳлленчӗксем типсе те ҫитмен. Шыв кайнӑран мачча тӑрри те, стенасем те хуралнӑ, кӑвакарнӑ. "Сӗтел хушшине ларма та шикленетӗп. Маччан пӗр-пӗр пайӗ йӑтӑнса анӗ те пӗтрӗ вара пуҫ", – тет культура ӗҫченӗ Альбина Васильевна Зверева. Инкек кӑтартма пултарнӑран хупасшӑн та ӑна вырӑнти влаҫ. Культура ӗҫне 26 ҫул панӑ хӗрарӑмӑн иккӗмӗш тӑван килне ҫухатас килмест. "Вӑхӑт иртнӗҫемӗн пушаннӑ ҫуртӑн чӳречисене те ҫӗмӗрлӗҫ. Камӑн кӑмӑлне кайтӑр ҫакӑ?" – чун ыратӑвне ҫиеле кӑларчӗ вӑл. Ҫав вӑхӑтрах иртнине аса илчӗ. Аса илмелли пайтах. Вутлансем шутсӑр туслӑ. Ӗҫре те, уявра та. Туй тумалла-и? Тӑван е тӑван маррине пӑхмаҫҫӗ – ӗлӗкхи чӑваш кӗписене арчаран кӑлараҫҫӗ те пурте пуҫтарӑнаҫҫӗ. Ҫурт купаламалла е ҫӗр улми лартмалла чухне те чӗнессе кӗтмеҫҫӗ. Елена Павловна ҫакна тӳрех ӗнентерме тӑрӑшрӗ. Йӗкӗреш ачасем ҫитӗннӗ унӑн. Ҫӗр улми лартма хатӗрленнӗ. Пӗчӗкскерсемпе ӗлкӗрме йывӑр. Вӗсене пӑхмалла. Тем вӑхӑтран пӳртрен кил картине тухать те ҫӗр улми ани ҫинче пахча тулли халӑх хӗвӗшнине курать.

Ялта пӗри чирлетӗр-ха... Урамӗпе пулӑшаҫҫӗ. "Мӗнпе? Эмелпе-и?" – кӑсӑкланатӑп эпӗ. "Ара, унпа кӑна пултӑр-и? – тӳрлетет кинемей мана, тӗшмӗртме тӑрӑшманскере. – Пӗри ӗҫлесе пулӑшать, тепри укҫа парать. Виҫҫӗмӗшӗ ӑна-кӑна туянать".

Строительство материалӗпе тивӗҫтерсен культура ҫурчӗн тӑррине Вутлансем хӑйсемех улӑштарса витӗччӗҫ. Хальччен йышпа туман ӗҫ мар. Альбина Васильевна шалти стенасене хӑех шуратӗччӗ. Упӑшки те ялан хиллех пулӑшӗччӗ. Ҫулӗпе Вутлан ялӗ ҫамрӑк, кӑҫал 90 тултарать. Ял-йышпа савӑнмалла, хӗпӗртемелле чухне культура ҫурчӗ хупӑнмалла теҫҫӗ.

Ӑна хай вӑхӑтӗнче колхоз тунӑмӗн. Моторин, Георгий Михайлович Киргизов ертсе пынӑ чухне питех те пуян пулнӑ вӑл. Тыр-пул, пахча ҫимӗҫ ҫитӗнтерсе, сад ӗрчетсе «миллионерсен» йышне лекнӗ. Вутланта, кӳршӗ ялсенче социаллӑ объектсем чылай тунӑ. Клуб та унӑн "ачиех". Анчах паян вырӑнти ял хуҫалӑх предприятийӗ ("Заря" хуҫалӑх) ӗлӗкхи пек тулли пурнӑҫпа пурӑнать тееймӗн. Культура ҫуртне ял тӑрӑхне парасси те кӑлтӑклӑ иккен, кирлӗ хутсене е ҫухатнӑ, е туса ҫитереймен.

"Пӗтӗм пуху, суйлавсем ҫак ҫуртра иртнӗ. Ӑна хупсан суйлавсене ют яла ҫӳрессипулмӗ манран", – татса хучӗ Елена Павловна, хӑй вӑхӑтӗнче сад ӑсти пулнӑскер. Шартлама сивӗ ҫул улмуҫҫисем шӑннӑран ӑна сада касма хушнӑ. Хам ҫуратнӑ "ачана" епле вӗлерӗп тенӗ те килӗшмен. Сада усӑсӑр кастарнӑ тесе те шухӑшлаҫҫӗ халӗ Вутлансем. Сыхланса юлнӑ улмуҫҫисем кайран ҫӗнӗрен чӗрӗлсе хунанӑ.

Улмуҫҫисем хушшинчи ҫӗрре сая яман колхоз. Сухан, хӑяр, турнепс, хӗрлӗ кӑшман, кишӗр – мӗн кӑна пулман Вутлансен! Ача-пӑча колхоз ӗҫӗнче ӳснӗ, ҫемьесем пай укҫипе пурӑннӑ. Елена Павловна вӑл вӑхӑтра алла уйӑхсерен 280-300 тенкӗ шалу илнӗ.

Паян ялта 4-5 ачаллӑ ҫемьесем сайра. Ҫамрӑксем яла юласшӑн мар. "Ӗҫ ҫукран", – теҫҫӗ ватӑсем. Ҫӗр ҫинче ӗҫ яланах тупӑнать, укҫа-тенкӗ ҫитсе пыманран инҫете ҫул тытать мар-и нумайӑшӗ. Ҫула тухайманни кил картишӗ тулли выльӑх усрать. Ирина Павловна Яковлева ырӑ тӗслӗх вырӑнӗнче. 26 ҫулта мӑшӑрӗсӗр юлнӑ. Виҫӗ ачине пӗчӗкрен ура ҫине тӑратнӑ, ҫӗнӗ ҫурт ҫӗкленӗ. Халӗ ватӑ амӑшне пӑхать, сӑвакан 3 ӗне, пӑрусем, сыснасем, ытти выльӑх тытать. Киргизовсем – предпринимательсем, ҫав вӑхӑтрах выльӑх чылай усраҫҫӗ, вӗлле хурчӗ ӗрчетеҫҫӗ.

Хуҫисем пурӑнман ҫуртсем те сахал мар. "20-30 ҫултан ял пушанса юласси шиклентермест-и?" – ыйтатӑп ватӑран. "Нимӗн те юлмасть", – тет Елена Павловна. Самай ҫамрӑкрах Альбина Васильевна ӑна пӳлме васкать. "Мӗнле юлмасть пултӑр? Ялта ҫурт туянас текенсем тупӑнсах тӑраҫҫӗ. Манӑн ывӑл та: "Анне, пӗр-пӗр ҫурт туянса пар-ха", – тет. Упӑшкан пиччӗшӗ те, Ҫӗнӗрте пурӑнаканскер, кунта ҫурт лартасшӑн". Ҫакӑн хыҫҫӑн хӗрарӑмсем Мускаврa ӗҫлесе пурӑнакан ҫемьене аса илчӗҫ. Кунта ҫуралса ӳснӗскерсем чаплӑ ҫурт лартнӑ, ҫавӑнпа вӗсем ҫӑвӗпех ялта. Пуринпе те туслӑ.

Тивӗҫлӗ канӑва тухсан килсе пурӑнакансем тупӑнсан Вутлан пӗтмӗ, анчах ҫамрӑксем тӗпленсен, ача-пӑча сасси янӑрасан малашлӑхӗ тата ҫутӑрах пулмалла та... Ҫак шухӑша палӑртсан Елена Павловна тӳрех электричество ҫутин ыйтӑвне хускатрӗ. Темшӗн пире тӗттӗмре усраҫҫӗ терӗ. Чӑннипе аплах мар-мӗн, анчах пӗчӗк ял ҫыннисем ҫутта сахал вӑхӑта панипе кӑмӑлсӑртарах.

"Вӑрман пекчӗ пирӗн ял", – терӗҫ Вутлансем. Вӑрманӗ халӗ те юнашарах. Ӗлӗк вӑл ҫак ял вырӑнӗнче те кашланӑ. Чурачӑкран малтанах 7 ҫемье куҫса килнӗ те вӑрман касса ял пуҫласа янӑ. Вутлансен ҫӗр лаптӑкӗ пысӑклансах пынӑ.

Паян ял хуҫалӑх предприятийӗсӗр пуҫне ялта фермер хуҫалӑхӗпе пурӑнакан ҫук. "Пӗр ҫын мӗнле пурнӑҫ тытайтӑр?" – шухӑшне палӑртма васкарӗ Елена Павловна. "Хӑйӗншӗн тытӗ-ха, халӑхшӑн вара?" – каллех ыйту лартрӗ ветеран. "Фермерсемпе кӑна пурнӑҫ тӑваймӑн. Колхозсене пӗлмесӗр йӗркелемен", – хӑех хуравларӗ вӑл. Ҫакӑн хыҫҫӑн ӑнлантӑм: пирӗн ял вӑрман пекчӗ тесе кинемей иртнине, ыррине, лайӑххине аса илчӗ.

**Ирина НИКИТИНА**

# Пулӑҫӑсем – хӗрарӑмсем

**Тоня инкене (ялта ҫапла чӗнеҫҫӗ) – Евдокия Игнатьевна Васильевӑна – Вӑтакас Татмӑшра (Канаш районӗ) нумайӑшӗ пӗлет, паллать. Чи малтанах ӑста пахчаҫӑ пулнипе. Арпуспа дынькӑна ялта пуринчен малтан ҫитӗнтерме тытӑннӑ. Унсӑр пуҫне вӑл кунсерен тенӗн клуб пӗви патне ҫул такӑрлать. Унта вӑлтапа ларма кӑмӑллать тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ хӗрарӑм.**

Лара-тӑра пӗлменскерпе тӗл пулса калаҫма тӳр килмерӗ. Пулӑран таврӑннӑ хыҫҫӑн, ахӑртнех, кӑшт каннӑ та вӑрмана кӑмпана тухса вӗҫтернӗ. Ҫапла пӗлтерчӗ хӗрӗ.

"Тоня инке хӑйӗнпе пӗрле чӗнмен пулсан паян кун та пулла ҫӳрес ҫукчӗ", – тет Любовь Владимировна Степанова. Вырӑнти ял хуҫалӑх предприятийӗнче тӑрӑшнӑ вӑл. Малтан – дояркӑра, унтан, хӑй калашле, ӑҫта янӑ, ҫавӑнта пилӗк авнӑ. Нимӗнле ӗҫрен те пӑрӑнман. Пӗррехинче ӑна йывӑр чир ҫапса антарнӑ. Пӗр уйӑх ура ҫине тӑрайман ҫамрӑк хӗрарӑм, сылтӑм ал-урине пач хускатайман. Ҫирӗп чунлӑ пулнӑран чире пур пӗр парӑнма шухӑшламан. Ҫавӑнпа паян вӑл хул туйипе майӗпен ҫӳрекелет. Пулӑра вара пӗтӗм хуйӑх-суйӑх ҫинчен манать. Кун пек чухне хӑйне самай аванрах туять. Киле ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл-туйӑмпа таврӑнма сӑлтавӗ те пур – витрере пулӑсем чӑмпӑлтатаҫҫӗ. Пулла килӗштерекен мӑшӑрне савӑнтарӗ: ӑшаласа е шӳрпе пӗҫерсе ҫитерӗ. "Юлашки вӑхӑтра ӑшалама кӑмӑллатӑп", – палӑртать Любовь Степанова.

"Апла шултра пулӑсемех кӗреҫҫӗ вӑлтана", – кӑсӑкланатӑп эпӗ, пӗрре те пулла ҫӳременскер. "Питех мар, анчах хурлас ҫук. Вӗттисене шыва каялла яратпӑр",



– тет хӗрарӑм пулӑҫӑ.

Хальхи вӑхӑтра Вӑтакас Татмӑшран виҫӗ хӗрарӑм пулӑ тытас ӑсталӑхпа туслашнӑ. Любовь Степановӑсӑр пуҫне Евдокия Игнатьевнӑн аппӑшӗ те ҫӳрет пӗве хӗррине. Иртнӗ вӑхӑтсенче те Вӑтакас Татмӑш хӗрарӑмӗсем пулла ҫӳреме юратнӑ. Ял ҫыннисем ветеринари фельдшерӗнче ӗҫленӗ Дарья Алексеевнӑна аса илеҫҫӗ. Кӳршӗри Йӑлмаччаран пӗвене тепӗр чухне 10-15 хӗрарӑм пуҫтарӑнса килет. Аҫтӑрхан хулинчен Пукӑртана куҫса килнӗ ҫемье те ҫывӑх пулнӑран Татмӑш пӗвине кӑмӑллать.

Хӑй вӑхӑтӗнче ӑна колхоз пӗвеленӗ те пулӑсем янӑ. Ӑҫтан тухатьши пулли – тӗлӗнеҫҫӗ хушӑран хӗрарӑмсем. Ара, ҫуллахи каҫсенче пӗве тавра ҫын хӗвӗшет! Хуларан машинӑсемпе те килеҫҫӗ. Арҫынӗ, хӗрарӑмӗ, ачи-пӑчи – пурте пулӑ тытасшӑн е мӑшӑрӗсене пулӑшасшӑн. Ачисен ҫуралнӑ кунне те пулӑ шӳрпи пӗҫерсе е ӑна тутлӑ пӑшӑхласа пӗве хӗрринчех ирттереҫҫӗ.

"Карпсем, тен, малтан пулнӑ, анчах халӗ ҫук. Карас, ратан, шыв ҫи кӗрет вӑлтана. Ратан – ҫӑткӑн пулӑ, вӗттисене ҫиет", – ӑнлантарать Любовь Владимировна. "Пулӑ вӑлча сапнине курнӑ-и?" – тӗпчет мана. "Паллах, ҫук", – хуравлатӑп эпӗ. Пулӑсем шывра шапӑлтатнӑ чухне вӑлча сапаҫҫӗ иккен. 2-3 куна пырать ҫакӑ. Ҫак вӑхӑтра пулӑ кӗмест. Вӑлча сапсан пӗрер эрне вӑл канать.

Ҫапла ҫав пулӑ тытма хӑнӑхсан. Ирхине 4-5 сехетре тӑрасси, пӗве хӗрринче 3-4 сехет е ытларах ларасси ним те мар. Тоня инке акӑ кӗрӳшне кура пулӑпа кӑсӑкланма тытӑннӑ. Пӗрремӗш хут алла вӑлта тытнӑ кун ӑнӑҫман ӑна. Ара, кӗрӳшӗ малтанах йӗркеллӗ ӑнлантарман хӗрарӑма. Хулккана леска тӑрӑх ҫӳлерех хӑпартсан вӑлта йӗппи тарӑна анасси ҫинчен пӗлнӗ пулсан пӗрремӗш кунхинех пуш алӑпа таврӑнмастчӗ пулӗ. Иккӗмӗш кунне вара кӗрӳшне тӗлӗнтернӗ. Лешӗ ҫитиччен ҫур витре пулӑ тытнӑ.

Любовь Владимировнӑн вӑлтине те пӗрремӗш хут виҫӗ пулӑ лекнӗ. Ытти чухне киле пушӑ алӑпа таврӑннине те астумасть.

Ӑманпа тата урпа пӑттипе пулӑ тытма кӑмӑллаҫҫӗ хӗрарӑмсем. Йӗп ҫине ҫӑкӑр ҫаклатсан асӑрхаса ӗлкӗрме йывӑр иккен: пулӑ туххӑмрах илсе тарать.

Любовь Владимировна пӗррехинче пӗвене ҫӳреме аппӑшне чӗннӗ. "Ӑмана вӑлта йӗппи ҫине тирнӗ чухнех йӑванса кайӑп", – яхӑнне те яман йӑмӑкӗ. Пытармасӑр каласан, Любовь Степанова та малтан ӑманран йӗрӗннӗ. Халӗ хӑнк та тумасть.

Пулла ҫӳрени – ялан килте ларни мар. Кунта Любовь Владимировна ҫынсемпе калаҫать, пулӑ кӗнӗ чухне мӗн пур йывӑрлӑх ҫинчен манса вӑлтана куҫ илмесӗр сӑнать. Ҫырмана анса улӑхниех мӗне тӑрать! Ҫӑмӑл мар чирлӗ хӗрарӑма, вӑл пур пӗрех ал-урана ытларах хускатма тӑрӑшать. Тоня инкепе вӑлта ҫӗклесе ир те каҫ (ҫанталӑка кура ӗнтӗ) утать пӗве хӗррине.

Тутлӑ пулӑ рецепчӗпе паллаштарма та килӗшрӗ. Хам шухӑшласа тупман, анчах ӑна тӗпе хурса хатӗрленӗ пулла ҫисе курнӑ. Питӗ тутлӑ терӗ.

Апла ас туса юлӑр е хут ҫине ҫырса хурӑр: лимон сӗткенӗ, майонез тата сухан янӑ хутӑшра пулла ҫур сехете яхӑн тытмалла. Унтан кӑвайт ҫине хунӑ барбекю ҫинче ӑшаламалла.

**Ирина АНДРЕЕВА.**

# Тыpă та пухăнтăр, çын пурнăçĕ те упрантăр

Çурла уйăхĕн 25-мĕшĕнче Комсомольски районĕнче трактор транспорт йышлă чупакан çулпа пынă. Прицепĕ çинче - михĕсем. Сасартăк тракторăн прицепа çаклатмалли хатĕрĕ вĕçерĕнсе кайнă. Тулли прицеп тӳрех чарăнайман, транспорт хирĕç килекен çул çине ярăнса тухнă, çăмăл автомашинăпа çапăннă. Суранланнă водителе пульницана ăсатма тивнĕ.

Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче Пăрачкав районĕнче хăрушă инкек пулнă. Каçхине 9 сехет çурăра комбайн жатки çине "Шевроле" автомашина пырса тăрăннă. Водителĕ ĕмĕрлĕхех куç хупнă.

Тата маларах Шăмăршă районĕнче çуран çын трактор айне пулса вилнĕ...

Ял хуçалăх техникипе çӳрекенсен айăпĕпе юлашки вăхăтра сахал мар çын аманать, пурнăçран уйрăлать. Йĕркене пăхăнманни пĕтерет мар-и? Патшалăх техника сăнавĕн инспекторĕсем çурла уйăхĕнче "Трактор" ятпа профилактика тĕрĕслевĕ ирттерчĕç. Уй-хирпе фермăсенче, строительствăра ĕçлекен техника юсавлăхне тĕрĕсленипе кăна çырлахмарĕç. Хуçалăх ертӳçисемпе, уйрăм çынсемпе тĕл пулса техникăна кирлĕ пек хатĕрлесе çула кăлармалли çинчен аса илтерчĕç.

"Трактор" операци, çулсерен ирттекенскер, йăлана кĕнĕ темелле. Трактористсем, комбайнерсем çакăн çинчен пĕлмен тени кулăшла. Тĕрĕслев вăхăтĕнче инспекторсемпе рейда тухатăн та тĕлĕнетĕн: асăрханулăх çинчен манса руль умне ларакансен йышĕ пĕчĕк мар. Ятарлă уйăхлăхра инспекторсем 2249 техника единицине тĕрĕсленĕ. Çав шутран 87-шĕ (4 процентĕ) çула юсавсăр тухнă, 68-ăшĕ (3 процент) хăрушсăрлăх йĕркине тивĕçтермен, 14-шĕ тавралăха виçесĕр варалнă.

Çул çинче чарнă техникăн 3 процентне инспекторсене вăхăтра тĕрĕслеттермен, 2,5 процентне саккун ыйтнă пек регистрацилемен. 74 çын руль умне вăл е ку категорипе çӳреме ирĕк паракан тракторист-машинист удостоверенийĕсĕр ларнă. Ку çеç-и? Транспорта тытса пынисен 10 процентĕн çумра ялан кирлĕ документсем пулман.

Çитменлĕхсемшĕн тепĕр чухне трактористсене кăна айăплани вырăнсăр. Техникăна çула кăларассишĕн яваплă çынсем, ертӳçĕсем механизаторсене рейса ярас умĕн документсене пуррине тĕрĕслемеççĕ.

Çакна кура пĕр уйăхра кăна 43 ертӳçе тата 320 механизатора административлă майпа явап тыттарнă. Пĕтĕмпе 320 пин тенкĕ ытла штраф тӳлеттермелле тунă.

Ăçта йĕрке çине ытларах алă сулнăха? Пĕтĕмлетӳ тăрăх çакă курăнать. Красноармейскипе Шупашкар районĕсенче техника çул çӳрев хăрушсăрлăхне тивĕçтермен. Шупашкар хулинче тата Муркаш районĕнче техникăна хăрушсăрлăх йĕркине пăхăнмасăр ĕçлеттернĕ. Вăрнар, Элĕк тата Шăмăршă районĕсенче регистрацилемен техникăна чылай тупнă. Çулсеренхи тĕрĕслев витĕр кăларман транспорта Муркаш, Куславкка тата Вăрмар районĕсенче ытларах.

42 машинăна регистраци паллисене туртса илсе çул çӳреме чарнă. Кунашкал тĕслĕх ытларах Муркаш (19 тĕслĕх) тата Етĕрне (6) районĕсенче пулнă.

Вăрнар, Канаш, Комсомольски районĕсенче тракторист-машинист удостоверенийĕсĕр е ятарлă категори илмесĕр руль умне ларакансем йышлă.

Административлă майпа чылай трактористa явап тыттарнисен, штраф хунисен (патшалăх техника сăнавĕн инспекторĕсем кăна) йышĕнче Вăрнар (23 протокол 16200 тенкĕлĕх), Элĕк (20 протокол 13200 тенкĕлĕх), Елчĕк (16 протокол 11400 тенкĕлĕх), Муркаш (22 протокол 10900 тенкĕлĕх) районĕсем тата Шупашкар хули (18 протокол 18300 тенкĕлĕх) палăрнă.



Комбайн жатки касса кайнă машина

ТИМСĔРЛĔХ

## Канмалли кунсенче

Вырсарни кун Çĕрпӳ-Чĕмпĕр автоçул çинчи Чурачăк çывăхĕнче ВАЗ-2114 машина (4 çын ларнă) "Лада-Грантăпа" (3 çын пулнă) çапăннă. Вăл транспорт хирĕç килекен çул çине вирхĕнсе тухнă-мĕн. "Лада" машина водителĕпе юнашар ларса пынă хĕрарăм тӳрех пурнăçран уйрăлнă. Икĕ машинăри тепĕр тăватă çын пульницана илсе çитернĕ чух тата илсе çитерсен ĕмĕрлĕхех куç хупнă.

Шăмат кун Шупашкар районĕнчи Апашпа Паçпак ялĕсем хушшинче 2 машина çапăннă. Малтанхи тĕрĕслев тăрăх – полици ĕçченĕ тытса пынă машина çул хĕрринчи машинăна тăрăнтарнă. Унта ларнă 63 çулти арçын самантрах пурнăçпа сыв пуллашнă, мăшăрне пульницана ăсатнă.

## Чипер утнă вырăнта

Кивĕ Вăрмарта пурăнакан кӳршĕсем каç пулттипе çул айккипе хăйсен çурчĕ еннелле утнă. Сасартăк арçынсенчен пĕрне хыçалтан машина пырса çапнă. Мăнтарăна капот тăррине ывăтса янă, хыççăнах темиçе метр çулпа малалла сĕтĕрнĕ. Кӳрши, инкекрен хăтăлма ĕлкĕрнĕскер, питех те йывăр аманнă юлташне пульницана илсе çитерме пулăшнă. Инкек кăтартнă водитель вара тӳрех куçран çухалнă.

Вăрмарти полици ĕçченĕсем çур сехетрен çывăхри вăрманта пытарнă машинăна шырáса тупнă. Унăн кузовĕ тата умри чӳречи сиенленнине асăрханă. Вăрмарти 20 çулти каччăн явап тытма тивет.

ПĔЧĔКРЕН ĂСА ИЛ

## Ача садĕнчи хула

Кăçалхи 8 уйăхра Шупашкар хулинчи çулсем çинче кăна 166 ача шар курнине палăртнă çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕн Шупашкар хулипе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Алексей Теллин. Йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕллевпе иртнĕ эрнере 112-мĕш номерлĕ ача сачĕн территорийĕнче автохула уçăлнă. Пĕчĕккисем кунта çул çинче тĕрĕс çӳреме вĕренĕç. Кирли йăлтах пур. Каçма, светофор, ятарлă паллăсем чăн çул çинчи пекех. Çак "хулара пурăнакансем" малашне вĕрентекенсем тата çул-йĕр инспекторĕсем пулăшнипе водитель, çуран çӳрекен, велосипедист пулса хăйсене ирĕклĕн тĕрĕслеме пултараççĕ.

Республикĕн тĕп хулинчи ача сачĕсенче кун пекки хальлĕхе пĕрре. Автохулара вĕрентни ача ăсĕнче мĕн пĕчĕкрен çирĕп тымарлантăр теççĕ çул-йĕр ĕçченĕсем. Каярах шкул, çемье хăйсен тӳпине хывсан çул çинчи лару-тăру аваланасса кĕтме шанăç пур.

ÇĔНĔЛĔХ

## Пачăшкăсем те пулăшасшăн

Канаш районĕнчи Вырăскас Пикших çуменчи аслă çул çинче тăтăшах инкек пулать. Транспорт питех те йышлă чупакан вырăнта çапла ĕнтĕ. Машинисене çынсем юратсах туянаççĕ, йĕркеллĕ çӳреме вара вĕренсе çитеймеççĕ. Иртнĕ эрнере Пикших çывăхĕнчи çул çине Канаш хулинчи чиркӳре ĕçлекен Александр атте тухнă. Машинăпа инçе кайма мар – кĕлĕ ирттерме. Çул çинчи инкек шутне чакарас тĕллĕшпе ĕçе районта хальччен пачăшкăсене явăçтарман. Çакă пĕрремĕш тĕслĕх. А-151 автоçул çинчи кĕлле пачăшкăпа пĕрле Пикших, Асхва, Шăхасан тата Атнаш çыннисем ирттернĕ. Службăна вĕçлес умĕн Александр атте хăрушă вырăна çветтуй шыв пĕрĕхтерсе тасатнă, çынсемпе чуна уçса калаçнă, ăнлантарнă.

## Машинăран тухмасăр

Штраф хуман водителе шыраса тупма паян хĕнтерех. Йĕркене пăснă пулсан парăма тӳлесе татмалла. Тӳлеме меллĕ вырăна çитме те тепĕр чухне вăхăт кирлĕ. Малашне çак ыйтăва инспекторсен умĕнчех татса пама пулать. Çул-йĕре патрульлекен машинăсенче авăн уйăхĕнче терминалсем вырнаçтарма тытăннă. Хальлĕхе республикăра 15 машинăра пур вĕсем. Çакăнпа усă курса айăпа кĕнĕ водитель штраф суммине туххăмрах тӳлеме пултарать (банк картипе).

ÇĂМĂЛТТАЙЛĂХ

## Пуйăс иртессе пĕлсех

Пуйăспа автотрантспорта пула çулталăк пуçланнăранпа республикăра 3 инкек сиксе тухнă. Юрать, вĕсенче çын пурнăçĕ татăлман. Çурла уйăхĕнче 2 инкеке шута илнĕ. "Гремячево" чукун çул каçминче пуйăспа КамАЗ машина çапăннă. Çакна пула пуйăсри тулли цистернăсенчен пĕри çаврăнса ӳкнĕ. Йывăр тиев турттармалли машина водителĕ пуйăс çывхарнине кăтартакан семафор çутине шута илмен, çул урлă каçса ĕлкĕрĕп тенĕ ахăртнех. Ĕлкĕрнĕ, анчах суранланнăскер хыççăнах пульницана лекнĕ.

Çĕрпӳре те çăмăл машина водителĕн пуйăс иртсе каясса кĕтес килмен. Машинист пуйăса хăвăрт чарма пикеннĕ, анчах машина ытла та çывăхра пулнăран ăна сиенлетмесĕр иртеймен.

Иртнĕ эрнере çул-йĕр инспекторĕсем чукун çул ĕçченĕсемпе черетлĕ рейда тухнă. Водительсене асăрханулăх çинчен аса илтернĕ, ăнлантарнă, сĕнӳсен пуххине алăран тыттарнă. Йĕркене пăснă 1 водителе тытса чарнă. Лешĕ пуйăс килнине пĕлсе тăрсах чукун çул урлă каçма хăтланнă.

Страницăна Ирина НИКИТИНА хатĕрленĕ.

## Сăнсем

# Вутлан



Вутлан Комсомольски районĕнчи Тукай ял тăрăхне кĕрет. Кунти çĕрсем "Заря" ял хуçалăх производство кооперативĕн шутланаççĕ.

Ялтан Шупашкара çитме 170 çухрăм, район центрне – 25, чукун çул станцине – 70 çухрăм.

Яла ĕлĕкренех Вутлан е Вутлам тенĕ. Унта чăвашсем çĕр ĕçĕпе пурăннă, хирте тăрăшнă, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетнĕ, йывăç касакансем пулнă.

1929 çулта "III Интернационал" колхоз йĕркеленнĕ.

1926-27 çулсенче Вутлан Патăрьел уесĕнчи Мăрат вулăсне кĕнĕ. Унтан пĕр тапхăр (1927-39 çулсенче) Йĕпреç район шутĕнче пулнă. 1939-62 çулсенче Комсомольски районĕн шутланнă. Ун хыççăн Патăрьел районне куçнă. 1965 çултанпа паянхи кунччен Комсомольски районне кĕрет.

1926 çулта Вутланта 6 кил пулнă, вĕсенче 11 арçынпа 15 хĕрарăм пурăннă. 1939 çулта арçынсен йышĕ 155-е, хĕрарăмсен 159-а çитнĕ. 1979 çулта 68 кил хуçалăхне 245 çын тытса пынă. 2002 çулта 68 кил 179 çынна (84 арçынпа 95 хĕрарăма) пĕрлештернĕ. Хальхи вăхăтра чăвашсем, вырăссем пурăнаççĕ. Ялта клуб, лавкка (уйрăм çын уçнă) пур, асфальт çул сарнă, çут çанталăк газĕ илсе çитернĕ.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Яна Долгушева





Еленăпа Вячеслав Соловьевсем



Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă Иван Зверев мăнукĕпе, мăшăрĕпе, кинĕпе

**ИНКЕК**

# Пулăшу парас енĕпе

Авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче 19 сехет те 56 минутра Çăлав службине Шупашкар хулинчи Петров урамĕнчи 165 хваттерлĕ, 3 подъездлă 9-мĕш çуртра пурăнакансенчен сигнал çитнĕ. Вĕсем пĕр подъездри хваттерсен стенисем çурăлнине пĕлтернĕ.

Информацие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев патне çитернĕ, чрезвычайлă лару-тăрăва сирес енĕпе ĕçлекен оперативлă штаб йĕркеленĕ. Çăлав службисен тата Шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕсен вăйĕпе çуртра пурăнакансене пурне те эвакуациленĕ, çуртра электроэнерги, газ, шыв пама пăрахнă, çавăрса илнĕ, хурал тăратнă.

Эвакуациленĕ çемьесене вăхăтлăха строительство техникумĕн общежитине, социаллă реабилитаци центрĕсене тата А.Г.Николаев ячĕллĕ 10-мĕш вăтам шкула вырнаçтарнă. Вĕсене апатлантарассине, ĕçмелли шывпа тивĕçтерессине йĕркеленĕ, психологи пулăшăвĕ панă.

Михаил Игнатьев çак пӳрт çывăхĕнче пулнă, лару-тăрупа паллашнă, кунта хăйсен тивĕçне кура пырса çитнĕ службăсемпе должноçри çынсем пĕр тикĕс, кирлĕ пек ĕçленине палăртнă.

Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ чрезвычайлă лару-тăрăва сирес енĕпе ĕçлекен оперативлă штаб ларăвне ирттернĕ.

Оперативлă информаци тăрăх – 70 хваттерте 153 çын пулнă. Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх – чрезвычайлă лару-тăру пулĕмсемпе усă курмалли йĕркене пăснипе, вĕсене аслăрах органсене пĕлтермесĕр çĕнĕрен планировка тунипе сиксе тухнă. Çавна май плитасем йĕпеннĕ, формине улăштарнă. Юлашки темиçе уйăх çуртра "Ăшă çурт" пăхса тăракан компани тивĕçтернĕ, унччен – "Капремстрой" управляющи компани. Юлашки икĕ çулта Чăваш Ен Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцине çуртра пурăнакансенчен çăхавсем пыман.

Çивĕч ыйтусене сӳтсе явнă май Михаил Игнатьев ЧР Строительство министерствине кĕске вăхăтра экспертсен пĕтĕмлетĕвне хатĕрлеме, Министрсен Кабинетне Шупашкар хулин администрацийĕпе пĕрле эвакуациленĕ гражданесене вырнаçтарассине тата апатлантарассине йĕркелес, çуртра пурăнакансене медицина тата психологи пулăшăвĕ, çавăн пекех вĕсем пурлăхне çухатас тăк укça-тенкĕ пулăшăвĕ парас енĕпе мерăсем йышănма хушнă.

xxx

2014 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне кĕртесси çинчен 308-рг хушăва алă пуснă.

Министрсен Кабинетне тата Шупашкар хулин администрацине чрезвычайлă лару-тăрăва пула инкек тӳснĕ гражданесене вăхăтлăха вырнаçтарассине, апатлантарассине тивĕçтерме хушнă. Çавăн пекех чрезвычайлă лару-тăрăва сирмешкĕн Министрсен Кабинечĕн резерв фондĕнчен палăртнă йĕркепе бюджет укçи-тенкине уйăрассине, инкек тӳснĕ гражданесене Чăваш Республикин патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн коммерци мелĕпе усă куракан пурăнмалли пӳлĕмĕсене черетсĕр парассине тивĕçтермелле.

Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине инкек тӳснĕ гражданесене медицина тата психологи енĕпе реабилитацилемелли ĕçсем ирттерессине тивĕçтерме хушнă.

**Раççей – спорт çĕр-шывĕ**

# Асăмран тухмасть Канаш

**Кăçал Канашри педагогика колледжĕ уçăлнăранпа 100 çул çитет. 15 пин ытла специалист вĕренсе тухнă унтан.**

Училищĕре вĕренме тата пурăнма мĕн пур майсем туса панăччĕ. Пÿлĕмре тирпейлĕ, хĕлле вара килтинчен ăшăччĕ.

Çуркуннехи экзаменсене тĕплĕн хатĕрленсе лайăх тытрăм. Каникул вăхăтĕнче Вăрнар районĕнчи «Ласточка» пионер лагерьне вожатăйра ĕçлеме кайрăм. Ăнлантăм: учитель профессийĕ, чăн та, манăн ĕç, ĕмĕрлĕх ĕç. Хамăн пĕтĕм ĕçе, калаçăва ялти шкулта, Канашри педучилищĕре вĕрентнĕ учительсемпе преподавательсем пек тума тăрăшрăм. Педагогсен ырă тĕслĕхĕ мана питĕ пулăшрĕ: çамрăк ачасемпе хăвăртах пĕр чĕлхе тупрăм.

Иккĕмĕш курсра вара пур енчен те хăюллăрах пулма тăрăшрăм. Вĕренÿре те, спорт ăмăртăвĕнче те.

Çăмăл атлетикăпа пире Бичурин Равель Мингалеевич, йĕлтĕрпе – Табаков Анатолий Абрамович вĕрентетчĕç. Иккĕшĕ те спорта чун-чĕрепе парăннă çынсем. Пире, студентсене, хăйсен ачисем вырăнне хуратчĕç. Сивĕ куçпа пăхнине те курман, кăшкăрашнине те илтмен. Мĕн тери чăтăмлăх, кăмăл çирĕплĕхĕ палăратчĕ.

1968 çулхи юпа уйăхĕнче Мехикăран XIX çуллахи Олимп вăййисен чемпионне Валериан Соколов боксера кĕтсе илтĕмĕр. Поезд кая юлса çитрĕ. Вiçĕ сехет юрлă çумăр айĕнче тăтăмăр. Мĕн чухлĕ халăх пуханнă! Ватти-вĕтти, пĕтĕм хула, пĕтĕм район. Вокзал çуртне халь-халь тĕртсе йăвантараççĕ тейĕн. Акă поезд çитсе чарăнчĕ. Оркестр музыка калать. Вакунран чăваш паттăрĕ тухни курăнса кайрĕ. Çÿллĕ мар, хитре сăн-питлĕ. Пичĕ çинче кăвак йĕрсем пур. Вăл сылтăм аллине çĕклерĕ. Мăнаçлăх туйăмĕ кăкăрти сывлăша пÿлсе лартрĕ. Кĕрлет, шавлать Канаш вокзалĕ. Унтан савăнăçлă митинг пуçланчĕ. Чăваш ачине, Олимп чемпионне, çапла пысăк хисеп тунине эпĕ пуçласа куртăм.

Хавхалану çитĕнÿсем тума çул уçать. Тепĕр икĕ уйăхран Шупашкара, Атăл леш енне хамăрăн «Спартак» обществăн республикăри чемпионатне, пухăнтăмăр. Кăмăл – çĕкленÿллĕ. Вун пилĕк километра биатлон чупса, çар карабинĕпе персе, чемпион пулса тăтăм. Ку – пĕрремĕш çĕнтерÿ! Медаль, диплом пачĕç. Педагогика училищинче те мана ăшшăн кĕтсе илчĕç. Тренировкăсенче мĕн чухлĕ тар юхтарман-ши? Хĕлле ялănах Канашран Шăхасан вăрманне çитиех çÿреттĕм. Тепĕр чухне унта çĕр-шыв чемпионĕ Владимир Воронков та вĕçтерсе çитетчĕ. Ун çинчен пире хамăр преподаватель Анатолий Абрамович мĕн кăна каласа кăтартман пулĕ.

Воронков Каçал тăрăхĕнчи Кĕтне Пасар чăвашĕ. Мĕн пĕчĕкрен йĕлтĕр чури пулса ÿснĕ. Шкулта ăмăртусенче пĕрле вĕренекенсенчен ăна никам та çитеймен. Пĕррехинче çак ача Канаша килет. Станцире пăравус курать те – чукун çул çинче ĕçлекен пулма ĕмĕтленет. Çак шухăшпа Челябинскра чукун çул транспорчĕн профессипе техника училищине вĕренме кĕрет. Вĕреннĕ хушăрах йĕлтĕре те манмасть, ăмăртусене хутшăнать, спорт разрячĕ илет. Училище пĕтерсен ăна Канаша, вакунсене техника тĕлĕшĕнчен тĕрĕслекен пункта слесарьте ĕçлеме яраççĕ.

Володя пушă вăхăта йăлтах спорта панă. Хулара ун чухне ачасен спорт шкулĕ ĕçленĕ. Унăн директорĕ тата тренерĕ паллă спортсмен, Атăл тăрăхĕнчи нумай ăмăртусен çĕнтерÿçи Владимир Яковлевич Григорьев пулнă. Вăл пĕтĕм пĕлĕвне, ăсталăхне вĕренекенсене панă. Каярахпа вĕсенчен нумайăшĕ спорт мастерĕсем пулса тăнă. Владимир Яковлевичăн чи тăрăшуллă вĕренекенĕ Воронков пулнă. Вăл йĕлтĕрпе чупмалли вăрттăнлăхсене хăвăрт ăша илнĕ, унăн кăтартăвĕсем кунсерен лайăхланса пынă. Кĕске дистанцисене чупас енĕпе Канашра Владимир Воронковпа танлашакан çын та пулман.

1964 çулта вăл çĕр-шыври çамрăк йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче 10 километра 33 минут та 23 çеккунтра чупса тухать. Вăл – чемпион тата СССР спорт мастерĕн нормативне ирттерсе тултарнă.

Чи кăсăкли – Воронков 1966 çул вĕçĕнче Швецире Çĕнĕ çул ăмăртăвне хутшăнни. Ăмăртура тĕрлĕ çĕр-шывран çĕр-çĕр йĕлтĕрçĕ (çав шутра Швеци королĕ те) хутшăнать. Çĕнтерÿçĕсене король кĕрĕкне парнелеççĕ.

Старт. Каçхи юр çийĕн пин-пин йĕлтĕр туйи ялтăртатса шăвать. Швеци çĕр-шывĕ сенсаци кĕтет! Акă вăл: финиша Совет Союзĕнчен килнĕ Владимир Воронков çăмăллăн чупса çитет. Кăна никам та кĕтмен! Ăна чи хисеплĕ парне – король кĕрĕкне тăхăнтартаççĕ. Çакă чаплă кĕрĕк Канаша та çитет.

Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне çуркунне вунă студент велосипедпа Хусана, унтан Ульяновска кайса килнĕччĕ. Патшалăх экзаменĕсем пуçланчĕç. Унăн пуçлăхĕ – Шупашкартан, Аркадий Григорьевич Улангин пулчĕ. Пуринпе те чăвашла тап-таса калаçать. Экзамен ыйтăвĕсене хуравланă хыççăн манран та хамăр ял, çемье çинчен ыйтса пĕлчĕ. Кăмăл тулчĕ: 1967-1970 çулсенче педагогика училищинче мĕн тери ăшă чунлă преподавательсем вĕрентрĕç пире. Ĕмĕрлĕх асăрна юлчĕ Канаш, манăн юратнă хула. Пĕр ушкăнра вĕреннĕ юлташсем, Патăрьел тăрăхĕнчи Нăрваш Шăхаль каччи Бородкин Василий Михайлович, Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ пулнă Акользина Людмила Федоровна... Пурне те пире Канашри педагогика училищи пурнăç çулĕ çине кăларчĕ.

Училищĕрен мана хамăр районти Мишеркасси вăтам шкулне ĕçлеме ячĕç. Спортпа туслă пулни пурнăçра питĕ нумай пулăшрĕ. Шкулта пĕр уйăх ĕçлесенех çара илчĕç. Мурманск облаçĕнчи Гаджиево хулинче Çурçĕр флотĕнче хĕсметре пултăм. Виçĕ çул хушши шыв айĕн çÿрекен чи пысăк кимĕпе иишсе çÿрерĕм.

**Геннадий БЫКОВ,**
**Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕ.**

## СЫВЛĂХ ТАТА ÇИТĔНÿ

Çĕнĕ Шупашкарта ача-пăчасен Олимп резервĕсен 3-мĕш спорт шкулĕнче Атăлçи тăрăхĕнчи спартакиада финалĕ иртнĕ. Унта тăлăх тата ашшĕ-амăшĕ пăхман ачасем мини-футбол, волейбол, эстафета чупăвĕ тата ишес енĕпе вăй виçнĕ.

Ăмăрту умĕн çамрăк спортсменсене РФ Атăлçи округĕн полномочиллĕ Представителĕн пулăшуçи Сергей Валенков саламланă. ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин çакна палăртнă:

– Спорт уявĕ чăваш çĕрĕ çинче иртни хавхалану кÿрет пире. Ку ăмăрту уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Эсир – пирĕн шанчăк, Раççей малашлăхĕ. Яланах маттур та хастар пулăр.

***

Виçĕм кун Правительство çуртĕнче "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форума тата РФ Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канашăн ларăвне хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен республикăри йĕркелÿ комитечĕн ларăвĕ пулнă. Унта Шупашкарти стадионсенче юсав ĕçĕсене вĕçлес, Форум кунĕсенче йĕркелĕхе сыхлас ыйтусене пăхса тухнă.

## АСЛĂ ÇĔНТЕРÿ: 70 ÇУЛ



# Нимĕç каски те, снаряд та пур

Аслă Çĕнтерÿ 70 çул тултарнине халалласа Енĕш Нăрвашри историпе асăну музейĕнче чылай ĕç пурнăçлаççĕ. Вĕсен шутĕнчех – музее çĕнĕ экспонатсемпе пуянлатасси. Акă нумаях пулмасть Мускав тăрăхĕнчи пĕр ял çывăхĕнче чавса кăларнă çар хатĕр-хĕтĕрĕ Тăвай тăрăхне çитнĕ. Мĕнле майпа-ха? Енĕш Нăрвашра çуралса ÿснĕ Сергей Лукин кунти пĕр шыравçăпа паллашнă. Çар хатĕр-хĕтĕрне лешĕ ăна парнеленĕ. Сергей Иванович вара çак тупрана ялти музей директорне Владимир Петрова панă. Панă тени тĕрĕсех мар, Мускавран машинăпа илсе килнĕ ăна. Кунта мĕн кăна çук: пысăк тата пĕчĕк калибрлă пушкăсем, снаряд тата унăн гильзи, нимĕç каски, тÿперен персе аннă самолетăн пĕр пайĕ, Дегтярев пулемет дискĕ, патронсен коробки тата ыт. те. Çар хатĕрĕсене çĕр айĕнчен чавса кăларнă. Кунта чылай упраннăран тутăхнă вĕсем. «Çывăх вăхăтрах экспонатсене тасатса йĕркене кĕртсешĕн, – терĕ Владимир Васильевич. – Мĕншĕн тесен вĕренекенсем те, ял халăхĕ те тÿрех музее килет. Вĕсем валли ятарлă çÿлĕксем хатĕрлерĕм».

Аслă Çĕнтерĕве халалласа çулсеренех альбомсем йĕркелеççĕ кунта. Чылайăшне Владимир Васильевич хăй тăвать. Çав вăхăтрах ку ĕçе вĕрентекенсемпе ачасене те явăçтарать. Тепĕр сăвапла ĕç вăл – вăрçа хутшăннă ял çыннин сăн ÿкерчĕкне шырасси. Вĕсем çинчен музейра уйрăм кĕтес пур.

Енĕш Нăрвашран 603 çын фронта тухса кайнă, вĕсенчен 245-ĕшĕ вăрçă хирĕнче выртса юлнă. Тăван тăрăха çĕнтерÿпе таврăннисенчен паян тăваттăшĕ çеç пурăнаççĕ. Вĕсен шутĕнчех Василий Иванов та пур. Вăл – Хĕрлĕ Çăлтăр орден кавалерĕ, Берлина çитнĕ. Çакнашкал маттур çынсен кун-çулне, ĕç-хĕлне çутатма тăрăшаççĕ вĕренекенсем. Тылра ырми-канми вăй хунă çынсенчен те ыйтса пĕлмелли чылай. Юбилей çулĕсенче тĕрлĕ юхăм йĕркеленине палăртрĕ музей директорĕ. Çитес çул та çак çул-йĕре тытса пырасшăн.

Музей çулсеренех пуянланать. Ялта кивĕ çуртсене пăснă май авалхи хатĕр-хĕтĕр тупăнатех. Çавна май Владимир Васильевича шăнкăравласа пĕлтерет ял-йыш. Лешĕ, музей ĕçĕшĕн чунне пама хатĕрскер, яланах унтан мĕн те пулин тупса таврăнать. «Ку япаласене пуçтармаллах. Саппасра пулни пăсмасть. Вĕсене урăх музейпа улăштарма та пулать», – терĕ вăл.

Нумаях пулмасть тепĕр экспонат тупăннă – революци вăхăтĕнчи телефон. Кунашкалли Смольнăйĕнче пулнă. Çирĕпскер, пысăксер пурне те кăсăклантарать. Ачасем тыта-тыта пăхаççĕ.

Хуçине кура çурчĕ те тирпейлĕ, пуян. Курса савăнмалли, тĕлĕнмелли пурах унта.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## ХИСЕП

# Ĕмĕрне ырăпа ирттерет

Патăрьел районĕнчи Турханта пурăнакан Геннадий Осипов çинчен лайăххине çеç калас килет: чунĕпе пуян, кăмăлĕпе ырă, вырăнхсене юратать, хăйĕн ĕçне тивĕçлипе пурнăçлать.

Ачаллах вăл хăйĕн пурнăçне выльăхсемпе çыхăнтарма ĕмĕтленнĕ. Çавăнпах ĕнтĕ Вăрнарти ял хуçалăх техникумне зоотехника вĕренме кĕнĕ. 1976 çулта Турхана, Тури Тăрмăша, Хурама Тăвара, Упамсана пĕрлештерекен «Россия»колхозра ĕçлеме пикеннĕ. Çулталăка яхăн фуражирта тăрăшнă хыççăн ăна сысна фермин заведующийĕ пулма шаннă. Унтанпа 37 çул иртнĕ.

– Выльăх патĕнче хăйĕн ĕçне юратман çын вăй хураймасть. Унччен сысна шучĕ хальхи пек сахал пулман. Çулталăкра патшалăха 100 тонна ытла какай сутнă. 1987 çулта самăртмалли сыснасене ÿт хуштарассипе тата ашкакай туса илессипе план пачĕç. Пирĕншĕн вăл самай пысăкчĕ. Фермăра ĕçлекенсемпе пухăнса калаçрăмăр та лартнă тĕллеве пурнăçлама килĕшрĕмĕр. Плана ирттерсе те тултартăмăр. Ун чухне укçа та аванах илтĕмĕр, – аса илет Геннадий Георгиевич утса тухнă кун-çулне тишкернĕ май. Шаннă тивĕçе ячĕшĕн тума хăнăхман вăл. Витесене хĕле валли хатĕрлеме яланах йышпа тăрăшнă. Вутă кирлĕ – пурте пĕрле вăрмана кайнă. Коллектива ертсе пыма пултарни те унăн лайăх енĕсенчен пĕри шутланать.

Геннадий Георгиевич тăрăшнипех ферма территорийĕ сада çавраннă. Кану пÿрчĕ патĕнче тахçан шурлăх пулнине халĕ ĕненес те килмест. Кунта паян 40 ытла йывăç çитĕнет: шĕшкĕ, пан улми, хăмла çырли, хурлăхан, кăвак чăрăш, йăмра... Вĕсене пурне те сысна ферминче ĕçлекенсем лартнă. Хунавсене килĕсенчен, улмаçырла питомникĕнчен, вăрмантан кăларса килнĕ. Лартнине çеç мар, вĕсене пăхса çитĕнтернĕ. Йывăççем ÿссе сараличчен пахча çимĕç çитĕнтернĕ. Çуркунне сад пахчи – тутлă шăршăллă чечексемпе, çулла – çăварта ирĕлекен çырлапа, кĕркунне пыл пек тутлă пан улмипе савăнтарать.

Кану пÿртĕнче те яланах таса та тирпейлĕ. Йĕри-тавра чечек ешерет. Вĕсене те Геннадий Георгиевич сĕнĕвĕпе лартнă. Ун пирки çут çанталăкăн чăн-чăн тусĕ теес килет.

Геннадий Осипов мăшăрĕпе икĕ ывăл çуратса ÿстернĕ, пурнăç çулĕ çине кăларнă. Иртнĕ çул вăл пенсие тухрĕ. Апла пулин те хăнăхнă сукмака такăрлатать, юратнă ĕçĕнчен уйрăлма васкамасть-ха.

**Ольга ПАВЛОВА.**

**Вулавӑш**

## КАÇХИ МЫСКАРА

«Чи-и-их-ня-я! – терĕм. – Пĕр витре пан улмишĕнех чухӑна юлмĕ-ха Сахрун арӑмĕ Укçине».

Каç пулса тĕттĕмленчĕ кӑна, витре йӑтрӑм та йӑпшӑна-йӑпшӑнах кĕрсе кайрӑм кӳршĕри Укçине пахчине. Лӑстӑр-лӑстӑр силлерĕм тутлӑ çимĕçсемпе йӑтӑнакан тулӑх улмуççи турачĕсене. Шӑпӑртатрĕç анчах улмисем. Самантрах тулса ларчĕ витре. Витре тавра кускаланӑ хушӑра манӑн хӑлхана курӑк чӑштӑртатнӑ сасӑ кĕрех кайрĕ. Пӑх та хайхи пуçа çĕклесе – хамӑн пахчара хӑяр анине пĕр кĕтӳ шӑпӑрлан тустарать кӑна.

«Вĕрентсе илес-ха ку шӑхличсене çын пахчине епле çӳремеллине», – шухӑшларӑм чунтан тарӑхса. Çавӑнтах хам ӑçта пулнине аса илтĕм те курак чĕппи евĕрех карса хунӑ çӑвара çийĕнчех чышкӑпала пӑкӑласа лартрӑм васкаса. Шӑпӑрлансем те асӑрхарĕç курӑнать мана, анчах хӑрас вырӑнне пушшех те хӑюланса кайрĕç ют пахчара. «Хӑй те ямӑттине ширама тухнӑ, хурах кӑшкӑрас çук-ха», – терĕç пулмалла.

Халь-халь йĕрсе ярас евĕр ним тума пĕлмесĕр аптраса тӑратӑп йӑран çаралса пынине сӑнаса. Тертленмесĕр ӳстереймĕн пахча çимĕçе.

Саранча пек вĕтĕр-шакӑр ахӑрса-кулса хӑяр анине хӑварчĕ çап-çара туса. Хама хам тӑн кĕртнĕ пекех пулчĕ. Çын туприне хапсӑнниех пĕтерчĕ мана. Пӑхса тӑрсах парса ятӑм пĕтĕм хӑяра, выртса юлчĕ тап-таса ана.

## КУШАК КУЛЛИ

Тахçанах çывӑрса тӑраннӑран кахал кушак пек карӑнса выртни йӑлӑхтарсах çитерчĕ Ваççана. Çĕр çӑтайми тунсӑхран хӑтӑлма подъезд умне тухса ларчĕ, асфальт çинче кускала-кускалах тĕпренчĕксем пуçтаракан ула-чӑла кӑвакарчӑнсене сӑнаса пута пачĕ тарӑн шухӑша.

Тем хушӑра-çке пĕр хура кушак йӑпшӑнса тухрĕ те таçтан муртан мӑрлата-мӑрлата Ваççан ури çумĕнче ачашланса сĕртĕнме тытӑнчĕ, именчĕклĕ куçĕсене хĕсе-хĕсе пӑхрĕ.

– У-у-ух, çапкаланчӑк! Шӑпах эсĕ çитменччĕ-ха кунта! – кушака тапса ывӑтас тесе сиксе тӑнӑччĕ кӑна... «Васи-и-или-ий!» – илтĕнчĕ кĕç темле çепĕç сасӑ.

– Тата кама кирлĕ пултӑм-ши? – кӑмӑлсӑртараххӑн пуçне çĕклерĕ Ваçça.

Ак тамаша!.. Кӳршĕ подъездран пĕр ытарайми чиперкке аллисене тӑснӑ та ун патнелле ыткӑнса пырать.

– А-а-а!.. – Тӳрех палласа илчĕ ӑна Ваçça: нумаях пулмасть гастрономра черетре пĕрле тӑнӑччĕ унпа. Çавӑн чухнех ун çинелле пи-итĕ хытӑ ӑш хыптарсах пӑхнӑччĕ-ха.

Капӑрскер хӑйĕн яштака урисене лайӑххах кӑтартас тесе юриех пиçиххи пек ансӑр юбка тӑхӑннӑ та – кама илĕртмĕ-ши ĕнтĕ?

– В-а-ася, Васи-илий, кил-ха кунта! – чĕвĕлтетрĕ тепĕр хут кӑмӑла çĕклекен асамлӑ сасӑ.

Пике шӳтлеменнине курсан тунсӑхпа асапланни çинчен йӑлтах манса кайрĕ Ваçça. Юрату ӑна вĕри мунчари хĕрӳлĕх пекех çунтарма тапратрĕ. Тӑрлата-тӑрлата пĕтĕм кĕлетки чĕтрентерчĕ.

– Н-у-у, Ва-ася!.. Васю-юшка!.. Кил ĕнтĕ, чуппа тӑвӑп сана! – чунтан йӑлӑнчĕ чиперкке.

Çакнашкал йӑпӑлти сӑмахсем хыççӑн Ваççан пуçĕ çил арманĕ евĕрех çавӑрӑнса кайрĕ. Куçĕсем те çап-çутӑ çулӑмпа ялкӑшрĕç. Унашкал хитре хĕр упраçӑн илĕртӳллĕ кĕлетки çине кӑшт кӑна пӑхса илме те мĕн тери паха та, чуп тума?.. Ыткӑнса килекен майрана часрах хӑй çумне пӑчӑртама тесе хыпалансах ытамне уй хапхи сарлакӑш саркаласа пычĕ Ваçça.

Анчах та... кӑтра çӳçне вутӑшла вĕçтерсе пыракан капӑр хĕр Ваçça умĕнчен çиçĕм пекех ялкӑшса иртсе кайрĕ. Йӑл-ял çиçсе тӑракан каччӑ еннелле пуçне çĕклесе пӑхма та шутламарĕ. Тенкел айĕнче хутланса ларнӑ çӑмламас чуна ярса илчĕ те «Васю-юшка, Васю-юшка, Васю-юнчик» тесе ачашла-ачашла подъездне кĕрсе çухалчĕ.

Чуп тума хатĕрленсе тутине тӑсса хунӑ Ваççана çав тери йĕкĕлтевлĕн куç хĕссе хӑпарнӑнах туйӑнчĕ кӑмӑллӑн мӑрлатма пуçланӑ кушак.

**Владислав КАРПОВ**

# Кулӑшла калавсем

## ШУКӐЛЬ ШУРККА

Пĕчĕк çырма уйӑрса тӑракан Кучанкас ялĕпе пĕрлешсех ларнӑ пулин те вӑтам ял кӑна вӑл Туртапуç. Туслӑ та ĕçчен халӑх пурӑнать унта. Çамрӑксен йышĕ те сахалах марччĕ-ха та, анчах романтикӑшӑн çунакан яш-кĕрĕм ялти шкултан вĕренсе тухсассӑн, хĕл каçма каякан кайӑксем пекех, таçта аякри çичĕ юталлах талпӑнать çав.

Çакӑн пеккисенчен пĕри вӑл – Шукӑль Шуркка. Темиçе çул тĕнче касса çӳренĕ хыççӑн тӑван Туртапуçне пукане пек илемлĕ мӑшӑр çаклатса таврӑнчĕ. Вырӑсла пуплекен арӑмпа пурӑнса хӑйĕн тӑван чĕлхине те манса кайнӑ иккен. Ял хушшипе хула майрине мӑнаçлӑн çавӑтса утать. Хӑйне чӑвашла сӑмах хушас-тӑвас пулсан нимĕн те ӑнланаймасть тейĕн – калаçасшӑн та мар.

Пурӑна киле пĕррехинче хӑна пулчĕ Кучанкасра шкулта пĕрле вĕреннĕ Павӑл ятлӑ юлташĕ патĕнче. Павӑлĕ вара «хӑмӑт» тӑхӑнма ĕлкĕреймен-ха. Амӑшĕ, Хрестин инке, икĕ юлташ пакӑлтатса ларнӑ хушӑра вӑр-вар хатĕрлесе лартрĕ сĕтел.

– Мĕнпе пуян, çампа сӑйлам, – шӳтленçи туса илчĕ кинеми шукӑль яшран именсе пӑхӑр тӑрӑх кӑларнӑ хаяр шĕвеке килсе лартнӑ май.

Вĕçкĕн хӑна пĕрремĕш черккене курнӑçланса, тутине макӑрнӑ чухнехи евĕр кукӑртса, йӳçĕне-йӳçĕне, пушатрĕ. Ыттине вара ним куç хĕсмесĕрех шалт та шалт тутарнӑ хыççӑн чĕлхи-çӑварĕ сапаласа янӑ пӑрçа евĕр майĕ çуклах вĕçерĕнсе кайрĕ, хӑйĕнпе тата капӑр майрипе çав териех мухтанма пуçларĕ. Вырӑсла питех пĕлмесен те, Хрестин инке Шурккана ӑмсанчĕ, шеллесе пӑхрĕ хӑйĕн пĕртенпĕр ывӑлĕ çинелле. Колхозра канӑç курмасӑр ĕçлекенскер, йӑлтӑртатса тӑракан галстукпала çакнашкал капӑр костюм хӑçан та пулин тӑхӑнса курĕ-ши? Яла çĕр ĕçĕпе тертленме кам ӑна качча килĕ-ши? Шуркка пеккисен умĕнче, паллах, нихӑш хĕрĕ те турткаланса тӑмĕ.

Кĕленчери юлашки тумламсене сӑрӑхтарса пĕтернĕ тĕле тавралӑх та, Шурккан армак-чармак сӑн-пичĕ те самаях тĕксĕмленчĕç. Халĕ кӑна харсӑрланса, сиккелесе лараканскер куç умĕнчех çил-тӑвӑлри хурӑн тӑрри пек сулланкаланма пуçларĕ. Малтан – хӑрах еннелле, кайран – тепĕр еннелле. Аран-аран кармашкаланса тухрĕ сĕтел хушшинчен.

Икĕ юлташ тайкалана-тайкалана ыталансах урамалла тухрĕç. Павӑл Шурккана килне çитиччченех ӑсатма шутларĕ.

Хырӑмне ӳстерсе янӑ шыçмак кутӑн вӑкӑр пекех турткаланса пырать. Урисем те пӑлахая персе вуçех утми пулчĕç. Хӑй вара тискер сасӑпа ӑнланмалла мар çухӑрашса пĕтĕм таврари шӑплӑха хускатрĕ. Йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ Павӑл хӑйĕнчен икĕ хут йывӑртарахскере сĕтĕрсе йӑлтах халтан кайрĕ.

Акӑ ĕнтĕ Туртапуçĕпе Кучанкас хушшинчен типме пуçланӑ кӳлленчĕк хĕррипе иртсе каймалла. Кунта шӑрӑхпа аптракан самӑр чушкӑсем кунсеренех ырӑ кураççĕ. Шаписем вара унтан тахçанах тарса пĕтнĕ.

Иртсе каясси нумаях та юлманччĕ, васкамасӑр, асӑрханкаласа утнӑ çĕртех турткаланса пыракан Шуркка темрен такӑнчĕ – Павӑлӑн ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ те тикĕт пек хуп-хура курӑнса выртакан лачакана аçа çапнӑ юпа евĕр шачлаттарса кĕрсе выртрĕ.

Санаторири пек сиплĕ пылчӑк ванни мар пулин те, меллĕ вырӑнтан тухма та шутламасть апӑрша. Ним тума пĕлмест аптраса ӳкнĕ Павӑл, кӳлленчĕк хĕррипе чĕппине çухатнӑ кӑвакал пек кускалать анчах, тусне ниепле те пулӑшма пултараймасть.

– Э-э-э! – тавçӑрса илчĕ сасартӑк Павӑл хӑйĕн хитре арӑмĕпе еплерех мухтаннине аса илсе. – Эсĕ выртса юлах эппин, çакӑнтах çĕр каç! Эпĕ вĕçтерем-ха сан майру патне. Питĕ килĕшет вӑл мана. Унпа эпир çав тери ваç-ваç пулма пултаратпӑр пек! Ман та тутанса курас пĕрре майра тенине!

Çакнашкал сӑмахсене илтсен чун кĕрсех кайрĕ пулас Шурккана: тин утма вĕренекен ача пек суллана-суллана тӑчĕ-тӑчех.

– Тӑхта! Тӑхта-ха!.. Кӑтартап эпĕ сана майра! – çийĕнчех аса илчĕ Шуркка пач маннӑ тӑван чĕлхине. – Мар... Мар... Э-э-этта... Гретта... Бретта!.. – Тайкалана-тайкалана, такӑна-такӑна яра пачĕ килĕ еннелле. Унталла та кунталла сирпĕнчĕ ун хыççӑн усал шӑршӑллӑ çӑра лапра.

## ГОРОСКОП

Пĕррехинче больницӑна кайма тухнӑскер çула май лавккана кĕрес тенĕччĕ.

Пӑхатӑп та – ак тамаша! – ĕççĕр аптракан хĕрарӑмсем ялти паллӑ пакӑлти Яхруçка тавра кускалаççĕ анчах.

– Гороскоп, гороскоп! – кӑшкӑрашать лешĕ. Ӑнӑçлӑ кунсем, йывӑр кунсем çинчен, уйӑх тӑхрисен тапхӑрĕсен витĕмлĕхĕ çинчен каласа ӑнлантарать, сывлӑшри пусӑмсемпе сиенлĕ хутшӑнусем çинчен калаçать. Сасси янраса кӑна тӑрать. Пурте хӑлхисене тӑратнӑ та çӑварĕсене карсах тӑнлаççĕ.

Çав хушӑра Тихӑнпа Караçук пырса кĕчĕç те Яхруçа тимлекен халӑха сире-сирех пĕр кĕленче «Çил арманĕ» текеннине çĕклесе тухрĕç.

– Атя, Мĕкĕте, арман авӑртма, – юптарса илчĕ хĕрĕнкĕ Караçук кĕленчине силлесе.

– Çу-ук-ха, çу-ук! Паян шӑл кӑларма питĕ ӑнӑçлӑ кун терĕç телевизорпа. Ним чухлĕ те ыраттармасть терĕç, – вĕçерĕнсе юлтӑм вĕсенчен. Вара лавккаран тухса шикленешикленех асаплантаракан шӑлран хӑтӑлма суллантӑм. Кайран çиесси час пулмасть тесе кафене кĕрсе апатлантӑм лайӑх кӑна. Больница алӑкĕ умне çитсе тӑнӑччĕ çеç... – вӑл яри уçӑлса кайрĕ те ман ума çатӑлти Яхруç тухрĕ тӑчĕ. Шӑпӑртатса юхакан вĕри тар лачкам тунӑ хӑйне, пӑсланать кӑна. Сӑнĕ те унӑн йӳçĕтнĕ пан улми евĕрех пĕтĕрĕнсе ларнӑ. Вӑл ман çине ху-урлӑхлӑн пӑхрĕ те:

– Мĕкĕте, фана кам каланӑ паян фӑл кӑлавмалли кун, пĕлтте ылатталмасть тефе? – аран-аран пӑшӑлтатрĕ чалӑшса ларнӑ армак-чармак тутисемпеле.

– Хам каларӑм. Канмалли кун пачĕç те паян, шӑла кӑларттарам-ха терĕм, – пĕлтертĕм Яхруçа чӑннине.

Яхруç урӑх чĕнмерĕ. Кĕсйинчен «Гороскоп» ятлӑ хаçата кӑларса тыттарчĕ те яра пачĕ хӑйĕн çулĕпе мĕскĕннĕн айлатса.




## ЧӐВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, авӑн уйӑхĕн 22-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
18.45 «ЫЛТӐН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА»
21.30 «РЕСПУБЛИКА»
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, авӑн уйӑхĕн 23-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
6.15 «ЫЛТӐН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА»
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРӐК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА»
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, авӑн уйӑхĕн 24-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (0+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерни кун, авӑн уйӑхĕн 25-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.30 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
20.45 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА»
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрне кун, авӑн уйӑхĕн 26-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
18.45 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ БАРАХТЫ» (6+)
20.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (12+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КӐЛАРӐМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА»
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шӑмат кун, авӑн уйӑхĕн 27-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА»
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «ЫЛТӐН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
10.00 «ДЖУНГЛИРЕ ÇУХАЛНИСЕМ». ЧӐВАШЛА КУÇАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НАЦИОНАЛЬНОГО ТЕЛЕВИДЕНИЯ ЧУВАШИИ (12+)
18.00 «ОТКРЫТЙ РЕГИОН» (12+)
18.30 «АВАН-И» (12+)
19.00 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТӐР» (12+)

**Вырсарни кун, авӑн уйӑхĕн 28-мĕшĕ**
9.00 «УСАЛ-ТĔСЕЛ» ЧӐВАШЛА КУÇАРНӐ ФИЛЬМ (16+)
17.00 «ЗАКОНОДАТЕЛИ» (12+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРӐК ЧУХ» (12+)
19.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
19.30 «ТĔПСĔР САПКАРИ АЧА САССИ». ОРИНИНРИ ХАЛӐХ ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔ (6+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Авăн, 17 – юн кун | Авăн, 18 – кĕçнерни кун | Авăн, 19 – эрне кун | Авăн, 20 – шăмат кун | Авăн, 21 – вырсарни кун | Авăн, 22 – тунти кун | Авăн, 23 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.25 | 6.27 | 6.29 | 6.31 | 6.33 | 6.35 | 6.37 |
| | анать | 19.04 | 19.01 | 18.58 | 18.56 | 18.53 | 18.50 | 18.48 |
| Кун тăршшĕ | | 12.39 | 12.34 | 12.29 | 12.25 | 12.20 | 12.15 | 12.11 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун |
| | | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче |

## ĂСТИ ЕПЛЕ – ĔÇĔ ÇАПЛА

# Ĕмĕрлĕхех ял-йыш асĕнче

**Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашри историпе асăну музейĕнче ялти паллă пахчаçăсемпе паллашма тӳр килчĕ. Вĕсен ĕç-хĕлне, кун-çулне туллин çутатнă кунта. Маттур çынсем çинчен вулакана та каласа кăтартма кăмăл турăм. Сăмахран, Виталий Владимиров çитĕнтернĕ çимĕçсем, улма-çырларан хатĕрленĕ варенисем (1995 çулта вĕретнисем), пахча çимĕç вăррисем паянхи кунччченех упранаççĕ музейре.**





**Виталий Владимирович** Тăвай тăрăхĕнче çеç мар, республикипех паллă пахчаçă пулнă. Вунă сотка çĕр çинче 400-е яхăн тĕрлĕ йывăç-тĕм ӳстернĕ. Вĕсен шутĕнчех женьшень, Китай лимонникĕ, Маньчжури майăрĕ, Япони айви, Камчаткăри кашкăр çырли (жимолость), мунчалалă кавăн (тыква мочалка), Китайри çĕр майăрĕ, чилим-кода (тыква бутылочная), ылтăн тымар (золотой корень лекарственный) тата ытти те. Кил хуçи вĕсен вăррисене почтăпа çыръса илнĕ. Унăн пахчинче çĕр улми валли вырăн юлман та темелле. Ăна 5-6 кас çеç лартнă.

Виталий Владимиров ку тĕлĕшпе ятарлă пĕлӳ илмен. 7 класс хыççăн урăх вĕренеймен вăл. Мĕншĕн тесен май килмен: ашшĕ вăрçă хирĕнче вилнĕ. 14 çулти Виталий колхоз ĕçне хутшăнма тытăннă. Салтакран таврăнсан «Красная Чувашия» хуçалăхра тракториста, каярахпа ялти газ участокĕн операторĕнче ĕçленĕ. Вăл общество ĕçне те хастар хутшăннă. 2000 çулта пурнăçран уйрăлса кайнă. Шел те, Виталий Владимировичăн пахчи халĕ хуçасăр. Унăн ĕçне малалла тăсакансем тупăнман.

**Тимофей Васильев** вара 30-мĕш çулсенчех арпус, ытти пахча çимĕç ӳстернипе палăрнă. Унсăр пуçне вăлах ăста ӳнерçĕ, юрăç пулнă. Апла пулсан сăмаха йĕркипе пуçлар-ха.

Тимофей Васильевич тăлăх ӳснĕ. Пилĕк çулта чухне ăна ашшĕн пиччĕшĕ Лука Трофимович, Чĕмпĕрте ĕçлекен пачăшкă, хăй патне илсе кайнă. Арçын ача пĕр вăхăт Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнчи хатĕрленӳ класне çӳренĕ, каярахпа учитель пулма вĕреннĕ. Пĕлӳ илнĕ вăхăтрах шкул хорĕнче юрланă, кĕвĕ-çемĕ хатĕрĕсемпе каланă. Ӳкерес тĕлĕшпе те ăста пулнă. 1905 çулта Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухсан пĕр вăхăт çакăнтах ĕçленĕ, ачасене рисовани предметне алла илме пулăшнă. Каярахпа тĕрлĕ кĕпĕрнери шкулсене вăй хунă. Анчах ӳнер енĕпе малалла вĕренес ĕмĕтне пăрахман вăл. 1910 çулта Питĕрти ӳнере пулăшакан обществошкулне вĕренме кĕнĕ. 1914 çулхи тĕнчен пĕрремĕш вăрçи унăн пурнăçне улăштарнă. Тимофей Васильевич хулари шкулсенче ĕçлеме тытăннă. Çуллахи вăхăтра пĕр ял каччисемпе, пулас ӳнерçĕсемпе М.Спиридоновпа тата Н.Сверчковпа (вĕсем ун чухне Питĕрти Художество академийĕн аслă училищинче вĕреннĕ), Самар кĕпĕрнинчи тата Атăлçин ытти тăрăхĕнчи чиркӳсене илемлетнĕ.

Вăл усă сассипе те палăрнă. Ахальтен мар чăваш каччине Питĕрти Мариинский театрти хорта юрлама явăçтарнă. Сăмахран, «Жизнь за царя», «Борис Годунов», «Аида» оперăсене хутшăннă. «Борис Годунов» операри тĕп партие Федор Шаляпин юрланă.

Революци хыççăн Тимофей Васильевич Ӳнер академийĕн мастерскойĕнче пĕр çул вĕренме май тупнă.

1919 çулхи кĕркунне вăл çемйипех Чăваш çĕр-шывне таврăннă. Арăмĕ Надежда Михайловна, Питĕрти консерваторире вĕреннĕскер, пианино та илсе килнĕ. Вăл дворян йăхĕнчен пулнă.

Кил хуçи Вăрнарти педтехникумра та, тĕрлĕ ялти шкулсенче те вăй хунă. Çавăн пекех ялти пултарулăх ĕçне те хастар хутшăннă. Вырăс, чăваш юррисене кăна мар, оперăсенчи арисене те шăрантарнă. Хăш-пĕр чухне арăмĕпе пĕрле юрланă. Надежда Михайловна пианинăпа каланă.

Яла таврăнсан шкул çумĕнчи участокра, каярах уйăрса панă çĕр çинче, питомник тунă. Унта вăл тĕрлĕрен сăнав ĕçĕсем ирттернĕ, çĕнĕ сортсем кăларнă. Ку колхоз йĕркеличченех пулнă. Вăлах ялта пуçласа арпус, дыня, иçĕм çырли, кăнтăр енчи ытти çимĕç çитĕнтернĕ. 1936 çулта «Чувашия» ятлă пысăк тухăçлă арпус сорчĕ кăларнă. Çĕнĕ сортăн калчине теплицăра е парникра шăтарма кирлĕ пулман, вăррине тӳрех йăран çине акма юранă.

Тимофей Васильевич ялта сахал пурăннă пулсан та пахча çимĕç ӳстерме те, опытсем тума та пĕлнĕ. Ку пĕлĕве вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ вăхăтрах илнĕ. Пулас учительсене унта ял шкулĕсенче ĕçлеме хатĕрленĕ, вĕсене агрономи, улма-çырла тата пахча çимĕç çитĕнтерес ыйтусемпе паллаштарнă. Шкулăн ял хуçалăх участокĕнче тĕрлĕрен опыт тума вĕрентнĕ. 1936 çулта 0,6 гектар çĕр çинче 150 центнер арпус пухса илнĕ. Тепĕр çул вара пĕр гектар çĕр çинчен – 300 центнер. Акнă хыççăн виçĕ уйăх çитиччченех арпус пиçсе çитнĕ.

Пултарулă селекционер 1935 çултан – республикăри, 1938 çултан Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх куравĕсене хутшăнма тытăннă. 1939 çулта ăна ВДНХан кĕмĕл медалĕпе чысланă. Вăл хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен «Арпус лартса ӳстересси» брошюрăра çырса кăтартнă. 1944 çулхи «Большевикла колхозшăн» хаçатра çапла çырнă: «Енĕш Нăрвашри Т.Васильев пахчаçă кашни гектартан 233 ц арпус, 250 ц помидор, 258 ц хăяр, 1126 ц сухан, 750 ц купăста туса илнĕ. Колхоз кассине 32000 тенкĕ укçа кĕнĕ».

Тимофей Васильевич чаплă пахчаçă, селекционер пулнине çĕр-шыв умĕнче кăтартнă. Чăваш автономийĕ йĕркеленнĕренпе 20 çул çитнĕ тĕле унăн опычĕпе паллаштаракан кинофильм ӳкернĕ.

Вăл çĕнĕ сортсене тĕрлĕ вырăнтан кӳрсе килнĕ. Хăшĕ-пĕрне почтăпа та çырăнса илнĕ. Икĕ хутчен Тамбов облаçĕнче пурăнакан И.Мичурин пахчаçă патĕнче пулнă. Ку тĕлĕшпе ĕçлекен Çĕрпӳри опыт пункчĕн директорĕпе Н.Етрухинпа çирĕп çыхăну тытнă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Тимофей Васильев хăй ĕçлесе пухнă 17 пин тенке самолет туянма панă. Çавна май ăна И. Сталин çырупа тав тунă.

Мĕн ватăличченех пахчара ĕçленĕ вăл. Çавăн пекех темиçе çул хушши чăваш тĕррисемпе эрешĕсене пухнă. Вĕсене упраса хăварас тĕллевпе Шупашкарти халăх пултарулăх çуртне леçсе панă. Ăста пахчаçă 1961 çулта вилнĕ.

Тимофей Васильевичăн йăхне паян вунă мăнукĕ малалла тăсать. Хĕрĕсем Гальăпа Ирина та çĕре кĕнĕ. Иринăн хĕрĕ Екатерина Павловна Кузнецова халĕ Енĕш Нăрвашра пурăнать. Вăл каланă тăрăх – Тимофеевсен йăхне тăсакансем кукашшĕ пекех пурте пултарулă. Вĕсен йышĕнчех юрлакансем те, пахчаçăсем те, вĕрентекенсем те пур. Апла пулсан пултарулăх, ăсталăх юнпа куçать тени тĕрĕсех.

**Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 17.09 | 18.09 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | +4 | +4 |
| | 14–16 сехетре | +8 | +8 |
| Çумăр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 750 | 751 |


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**6. Песок,** гравмассу, чернозем, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**591. Мед цветочный с собственной пасеки** с доставкой. Т. 89279903070.

**618. Копалки,** сортировки, **плуги,** дискаторы, разбрасыватели. Дешево. ДОСТАВКА! Т. 8-937-955-98-02.



«ХРЕСЧЕН САССИ» Обществăпа политика хаçачĕ Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13. Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3500
Тираж 3752

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем явапла.